# Çĕршыв хӳтĕлевçисене уявпа ăшшăн саламлатпăр!

Анне, аппа та йăмăк, мăшăр... Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă

ХЫПАР

1997 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

# Чăваш ХĔРАРĂМĔ

6(876) №, 2015, февраль/нарăс, 21

Хакĕ ирĕклĕ. 16+

Хаçата электронлă адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.


ÇĂЛТĂР ÇӲПÇИ

## "80 тултармасăр сцена çинчен анмăп"



**Валентина КУЗНЕЦОВА, чăваш эстрада юрăçи**

Паян çĕр çинчи пур хĕрарăм та Украина хыпарĕсемпе кăсăкланать ахăртнех. Кама кирлĕ çак вăрçă? Мĕн чухлĕ çын пĕтрĕ. Вĕсен – кусĕсене ĕмĕрлĕхех хупнисен – хушшинче ачасем те пурри чуна çурать, татăк-татăк туса пайлать. Хам та амăшĕçке. Епле ăнланмăн ачине çухатнă хĕрарăма?! Паян кирек мĕнле амăшĕ те пĕртен-пĕр шухăшпа пурăнать пулĕ тетĕп – вăрçă вучĕ кунта ан çиттĕрччĕ... Турă сыхлатăр пирĕн ачасене çак инкекрен. Раççейре яланах тăнăçлăх хуçалантăрччĕ.

Хамăн пурнăçăмра йăлтах лайăххи чуна ăшăтса тăрать. Упăшкам маттур, çемьешĕн тăрăшать. Ачасем те лайăх вĕренеççĕ, сывлăхлă ӳсеççĕ. Хĕрарăма хăйне телейлĕ туйма урăх мĕн кирлĕ? Хамăн та сывлăх енчен аптăрас марччĕ – амăшĕн лайăх пулсан çемьере те йăлтах килĕшӳллĕ йĕркеленсе пырать.

Малашлăха планлама хăнăхнă эпĕ. Хам ума çапла тĕллев лартнă – 96 çулччен пурăнмалла. Сцена çинчен вара 80 тултармасăр та анмăп. Манăн ĕмĕте Турă илтрĕ. Çакна ăçтан пĕлетĕп-и? Чунра туятăп.

Турă патне тĕрлĕ çын тĕрлĕ çулпа çитет. Анчах та çакна манмалла мар – ăна хамăра япăх чухне кăна мар, вĕçĕмех, кашни кун, кашни самантра, аса илмелле. Эпĕ, калăпăр, пĕрре те хам çине хĕрес хывмасăр сцена çине тухса курман. Шел те, çынсем Турăпа питĕ çывăх тесе калас килмест. Чун тасалăхĕ пирки шухăшлама манатпăр тепĕр чухне. Халĕ модăна кĕнĕ "аура" сăмахпа та палăртаççĕ-ха ăна. Асăрхăр-ха: ырă çын патне ырриех туртăнать, усалли вара – усал патне. Ман йĕри-тавра ырă, лайăх çын нумай. Яланах çапла пултăрччĕ. Пурнăç çак йĕркепех аталанса пырсан палăртнине пурнăçлама çăмăлрах пулĕ, ырри те пурнăçра ытларах йăва çавăрĕ.

Сцена тенĕрен вара, юлашки вăхăтра кунта ырах мар улшăнусем пулса пыни чуна ыраттарать. Чăваш эстради аталанма кăна пуçланă чухне юрăçсем мĕн тĕрлĕ конкурс витĕр тухман пуль? Юррисене мĕн тĕрлĕ алапа алламан-тăр. Пĕр сăмахĕ тивĕçтермесессĕнех юрра тавăрса паратчĕç – пĕçерсе çитермешкĕн. Халĕ вара çакă йăлтах иртнĕлĕхе юлчĕ. Анчах та кун пирки çитес вăхăтра тĕплĕнрех калаçăпăр.



Владимир ИВАНОВ сăнӳкерчĕкĕ.

2 стр.

# Дмитрий Медведев Чăваш Енпе кăмăллă

***Кĕске тапхăртах пысăках мар хулана Раççей Президенчĕ те, çĕршыв Правительствин пуçлăхĕ те килни халиччен пулнă-ши – калаймастăп, çапах кирек мĕнле пулсан та Çĕнĕ Шупашкар ку енĕпе палăрмаллипех палăрчĕ тейĕттĕм. Октябрьте сумлă спорт форумĕ иртнĕ май химиксен хулине РФ Президенчĕ Владимир Путин килнĕччĕ, ĕнер вара унта Дмитрий Медведев премьер-министр пулчĕ.***

Вăл кăна та мар. Сумлă хăнасен спискĕ чăннипех вăрăм. Вĕсен шутĕнче – Аркадий Дворкович вице-премьер, РФ Президенчĕн пулăшуçи Андрей Белоусов, вĕренӳ министрĕ Дмитрий Ливанов, РФ Президенчĕн федерацин Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕ Михаил Бабич, Тутарстан Президенчĕ Рустам Минниханов, Самар облаçĕн кĕпĕрнаттăрĕ Николай Меркушкин, Çĕнĕ технологисем хатĕрлекен центрăн аталану фончĕн президенчĕ Виктор Вексельберг, РОСНАНО правленийĕн председателĕ Анатолий Чубайс тата ыттисем.

Тĕп йыш – РФ Президенчĕ çумĕнчи экономикăна çĕнетес тата Раççейĕн инноваци аталанăвĕ енĕпе ĕçлекен канаш президиумĕн членĕсем. Чăваш Ене вĕсем шăпах президиум ларăвне килнĕ.

Тĕнчери лару-тăру лăпкă маррине кура-тăр Федерацин хурал службин йышăннă сыхлăх мерисем чăннипех çирĕп: аэропортра журналистсене çиелти ăшă тумтире хывтарнипе кăна çырлахмарĕç. Арçынсене авă пиçиххисене те салттараççĕ, хĕрарăмсене вара аттисене хывтараççĕ – кун пеккинех курманччĕ. Тепĕр тесен, çапла кирлĕ-тĕк – пурнăçламаллах, пресса представителĕсем куншăн кӳренмерĕç. Аэропортран Дмитрий Медведев тӳрех Çĕнĕ Шупашкара çул тытрĕ. Асăннă канашăн президиумĕн ларăвĕ унта, «Хĕвел» ООО заводĕнче, иртет.

Лару умĕн вара хăнасем, журналистсем завод ĕçĕ-хĕлĕпе паллашма пултарчĕç. Чăннипех – паянхи пурнăçа тивĕçтерекен предприяти. Кунта тутăхнă, мазутпа-мĕнпе вараланнă оборудовани кураймăн. Йĕри-тавра таптаса. Пире те цехсене шурă халат-калпак, бахилы, резина перчетке тăхăнтартса кĕртрĕç. Кунта тусан пĕрчи те пулмалла мар – акă мĕнлерех производство. «Хĕвел» компани продукцийĕпе тĕпрен илсен хĕвел электростанцийĕсем тума усă кураççĕ. Акă вăл – завод продукцийĕ: 1,4 тăваткал метр пысăкăш панельсем. Вĕсемпе энерги çителĕксĕр тата инçетри районсенче пурăнакансене электричествăпа тивĕçтерме меллĕ.

Паллах, хакĕпе те кăсăклантăмăр. Уйрăм çыннăн вăтам çурчĕ валли 3 кВт электроэнерги кирлĕ тейĕпĕр. Энергин çак калăпăшĕпе тивĕçтерме хайхи панельсем 15-20 кирлĕ. Кашнин хакĕ – 5-7 пин тенкĕ. Вăт, «перекетлĕ электричество» хакне шутласа палăртма йывăр мар. Завод ертӳçисем палăртнă тăрăх – производство вăй илсе пынă май продукци йӳнелмелле.

## ÇАНТАЛĂК

| | кăнтăрла | çĕрле | |
|---|---|---|---|
| 21.02 | + 1 | – 2 | |
| 22.02 | + 1 | – 1 | |
| 23.02 | 0 | – 1 | |
| 24.02 | – 1 | – 5 | |
| 25.02 | – 1 | – 7 | |
| 26.02 | – 3 | – 9 | |
| 27.02 | – 2 | – 8 | |



# Дмитрий Медведев Чăваш Енпе кăмăллă

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./

Çав вăхăтрах электроэнерги хакланса пырать. Çавăнпа та хĕвел батарейисен хăйхаклăхĕпе уссин шайлашăвĕ хĕвел электроэнергийĕ майлă пулни куçкĕрет.

2015 çулăн иккĕмĕш çурринче завод проектпа пăхнă хăватпа /çулталăкра 97,5 МВт/ ĕçлеме пуçламалла. Паян кунта 300 çын вăй хурать. 2020 çулччен «Хĕвел» ООО хăйĕн фотоэлектричество модулĕсемпе усă курса пĕтĕмĕшле хăвачĕ 254 МВтпа танлашакан хĕвел электростанцийĕсене хута яма палăртать. «Пĕрремĕш чĕкеçсем» пур та ĕнтĕ. Алтай республикинче Кош-Агач хĕвел электростанцине хута янă. Халĕ Бурятире, Пушкăртстанра, Оренбург, Саратов облаçĕсенче, ытти регионта çавнашкал станцисем проектлас тата тăвас енĕпе ĕçлеççĕ.

Кантăка цинк оксичĕн ток яракан ятарлă сийĕпе витекен автомат линийĕпе, роботсем ĕçлекен производствăн ытти участокĕпе паллашнă хыççăн Дмитрий Медведев çўхе пленкăллă хĕвел модулĕсен промышленноç производствине старт пачĕ. Завод чăннипе чылай маларах ĕçлеме тытăннă пулин те çакăнта хăйнеевĕр сăнарлă пурах: ăслă технологисене тĕпе хуракан çĕнĕ производство Чăваш Ен экономикишĕн çирĕп тĕрев пултăр!

## Раççей: ăс-хакăлсăр аталану çук

Ĕнер Çĕнĕ Шупашкарта РФ çумĕнчи экономикăна çĕнетес тата Раççейри инноваци аталанăвĕ енĕпе ĕçлекен канаш президиумĕн ларăвĕ иртрĕ. Ăна Дмитрий Медведев премьер-министр ертсе пычĕ.

Вăл çакна палăртрĕ: «Пирĕн пурнăçа çĕнĕлĕх питĕ хăвăрт кĕрсе пырать. Çакна эпир хĕвел батарейисем туса кăларакан производствăна курнă хыççăн аван туйса илтĕмĕр. Нано-технологисене ĕçе кĕртессипе çĕршыв юлашки вăхăтра курăмлă утăмсем туни – ырă пулăм. Анчах паян ăс-хакăл пурлăхне упрасси тата право тĕлĕшĕнчен хўтĕлесси мала тухса тăнине пурин те асра тытмалла. Çак тĕллеве пурнăçлассипе Правительство тивĕçлĕ йышăнусем турĕ ĕнтĕ. Çĕнĕ шухăшсене производствăра ĕçе кĕртесси вăйланать, ăс-хакăлпа çыхăннă проектсене саккун енчен хўтĕлеççĕ.

РФ вĕрентў тата наука министрĕ Дмитрий Ливанов каланă тăрăх – кирек епле çĕнĕлĕхĕн уссине маларах курса тăмалла. Ку тĕлĕшпе тĕнче опычĕ те пирĕншĕн пĕлтерĕшлĕ. Калăпăр, Китай ăсчахĕсем хăйсен çулне суйласа илнĕ. Вĕсем ыттисем алла илмен производствăна хута яраççĕ те кайран тин патент процесĕ вăй илет. Пирĕн наука-техника аталанăвĕнче патент хатĕрленипе пĕрлех производствăна та урăхлатаççĕ. Уннчен çĕршыв тупăшĕнче чĕртавар сутнипе пулнă укçа тĕп вырăн йышăннă, халĕ çĕнĕ технологисене те сĕнме майсем пур. Паян çакна ăнланса илмелле: ăс-хакăл вăл – пуянлăх. Унпа пĕлсе усă курсан эпир курăмлă çитĕнўсем тăвăпăр.

«Росатом» патшалăх корпорацийĕн тĕп директорĕн заместителĕ Вячеслав Першуков хăйсен ĕçĕ-хĕлĕ çинче чарăнса тăчĕ. Раççей ăсчахĕсемпе специалисчĕсем сĕннĕ проектсене нумай çĕршывра ырласа йышăннă. МАГАТЭ ертўлĕхĕ те пирĕн çĕнĕлĕхсене тишкерсе çул парать. Çавăнпа лицензи тата патент илессипе çыхăннă мĕнпур документсене хатĕрленĕ чухне тĕнче стандарчĕсене пăхăнмалла. Вара çĕнĕ технологисене тиркекен тупăнмĕ.

Çулталăк çурă каярах Раççейре ăс-хакăл правине хўтĕлекен Суд ĕçлеме тытăннă. Унăн председателĕ Людмила Новоселова пирвайхи йывăрлăхсене асăнчĕ. Чăнах та, пултаруллăхра, наука-техника шыравĕнче тавлашуллă самантсем сиксе тухкалаççĕ. Тĕпчев институчĕсемпе уйрăм çынсем судра тĕрĕслĕх шыранă тĕслĕх йышлансах пырать. Тавлашусене суд ларăвĕччен татса парсан питĕ лайăхчĕ. Малашне çивĕч ыйтусене сўтсе явма паллă эксперт-семпе специалистсене явăçтарасшăн.

Ăс-хакăл харпăрлăхĕ – нумай енлĕ ăнлав. Кунта автор правине, çĕнĕ шухăша производствăра хута яракан коллектив шухăш-кăмăлне тĕпе хумалла.

## «Лайăх» – çапла хакларĕ пирĕн ĕç-хĕле Дмитрий Медведев

РФ Президенчĕ çумĕнчи канаш президиумĕн ларăвĕ хыççăн Раççей Правительствин Председателĕ Дмитрий Медведев Чăваш Ен Пуçлăхĕпе Михаил Игнатьевпа ĕçлĕ тĕлпулу иртерчĕ.

Дмитрий Анатольевич кăмăллă пулни тўрех палăрчĕ: «Михаил Васильевич, сирĕнпе пĕрле Çĕнĕ Шупашкарта усă лайăх производствăпа, чăннипех çĕнĕ йышшискерпе, паллашрăмăр. Вăл республика территорийĕнче те, пĕтĕм çĕршыв территорийĕпе унăн тулашĕнче те пысăк усă кўрессе шанатăп, мĕншĕн тесен кунта – çĕнĕ технологисем, вĕсем чăрăнса тăмаççĕ, аталанаççĕ».

Çакăн хыççăн Правительство ертўçи республикăн социаллă пурнăçпа экономика лару-тăрăвĕпе, ĕçлевпе, ачасен шкулччченхи учрежденийĕсемпе



çыхăннă ĕçпе паллаштарма ыйтрĕ. Михаил Игнатьев кашни пунктпа татăклă хурав пачĕ:

– Эпир – Çĕнĕ Шупашкарта, вăл – пĕлтерĕшĕпе Чăваш Республикин иккĕмĕш хули. Хула çыннисен ячĕпе Раççей Президентне Владимир Владимирович Путина, Правительствăна, Сире çак монохулана пулăшас тĕлĕшпе вăхăтлă йышăну тунăшăн тав тăватăп.

Тăватă çул каяллахи лару-тăрăва илес-тĕк кунта ĕçсĕрлĕх шайĕ пысăкчĕ – 9,5%. Паян – 0,5% шайĕнче. Çак заводсăр пуçне кунта вăтам, пĕчĕк бизнес аван аталанма тытăнчĕ. Чылай производство усăлчĕ. Индустрипе строительство комбиначĕ, йывăрлăхра пулнăскер, ĕçлесе кайрĕ. Пĕлтĕр клинкер плиткисен производствине уçрăмăр. Май уйăхĕнче брусчатка валли плитка кăларма пуçласшăн. Çапла аталану тапхăрăн-тапхăрăн пырать, утăм хыççăн утăм тăватпăр.

Пирĕн иртнĕ çулхи макроэкономика кăтартăвĕсем япăх мар. Регионăн пĕтĕмĕшле продукчĕн ўсĕмĕ – 2,5%. Кăçал валли прогноз иккĕ – лайăххи тата япăххи. Промышленноç производствин индексĕ 104,5% шайĕнче, пурăнмалли çурт-йĕр хута ярасси – 103%, ялхуçалăх производстви – 102,8%. Строительство комплексĕ тĕлĕшпе кăштах чакни сисĕнет, анчах эпир хăш-пĕр объекта кăçал вĕçлеме хăвартăмăр. Строительство ĕçĕсен пахалăхĕ саккасçăсен стандарчĕсене тивĕçтертĕр терĕмĕр.

Çак самантра Дмитрий Медведев унăн сăмахне пўлчĕ: «Сирĕнпе пĕрле паллашрăмăр вĕт – куртăмăр. Унта – пысăк стройкăсем, çав шутра пурăнмалли çурт-йĕр массивĕсем çĕкленеççĕ. 1 млн тăваткал метр терĕр-и?» Çĕнĕ Шупашкара килнĕ чух тĕп хула çумĕнче çĕкленекен Çĕнĕ хула çумĕпе иртнĕ те – Правительство пуçлăхĕ тем тесен те унта пĕрин хыççăн тепри çĕкленекен нумай хутлă çуртсене курнă ĕнтĕ, çавсем пирки каларĕ-тĕр.

Михаил Игнатьев хăйĕн хуравне малалла тăсрĕ: «Пĕлтĕр эпир 862 пин тăваткал метр çурт-йĕр тунă. Тĕллев – 1 млн тăваткал метра çитересси. Мĕншĕн тесен пирĕн умма тĕллев лартнă: кашни çын пуçне 1 тăваткал метр пулмалла. Иртнĕ çул ку кăтарту 0,7 тăваткал метр пулнăччĕ. Федерацин Атăлçи округĕнчи чи лайăх кăтарту – çак шая тытса пырăпăр. Патшалăх тĕрев панине кура эпир инфратытăм енĕпе пулăшакан микрорайонсем пур. Правительство йышăннă программăна, 1 тăваткал метршăн 4 пин тенкĕпе пулăшаканскере, хутшăнатпăр.

«Лайăх», – пĕтĕмлетрĕ Дмитрий Анатольевич. Çав вăхăтрах вăл ипотека рынокĕнчи лару-тăрăва сăнаса тăма сĕнчĕ. Мĕншĕн тесен паян кредитсен никĕс шайĕнчи виçи питĕ пысăк, çакă ипотекăна пырса çапрĕ. Акă мĕншĕн Правительство шайĕнче темиçе йышăну тунă, çав шутра – ипотека программисене субсидисемпе пулăшас тĕлĕшпе те.

– Çак ĕçе сирĕнпе, регионсемпе, пĕрле тăвăпăр, – терĕ вăл. – Мĕншĕн тесен кризиса хирĕçле утăмсем кирлĕ, Правительство хушнипе эсир çак ĕçе тăватăр, хăвăрăн çак енĕпе ĕçлекен подразделенисене йĕркеленĕ. Çавăнпа та çулталăк тăршшĕпех ку енĕпе тимлĕ пулар, мĕншĕн тесен çакă питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Дмитрий Медведевпа Михаил Игнатьев калаçăвĕ, паллах, çакăнпа кăна вĕçленмерĕ – малалла тăсăлчĕ. Анчах, шел те, çак самантра журналистсене калаçу пыракан пўлĕмрен тухма ыйтрĕç...

**Хамăр инф.**

КУРАВ

# Çĕрулмирен тупăш илмелле

**Февралĕн 19-20-мĕшĕсенче Шупашкарти "Николаевский" суту-илў çуртĕнче регионсен хушшинчи "Çĕрулми-2015" VII курав иртнĕ. Унта Мускав, Санкт-Петербург, Чулхула, Липецк, Самар, Омск, Архангельск, Тюмень, Кострома облаçĕсенчен, Тутарстанран, Пушкăртстанран, Алтай крайĕнчен, Çурçĕр Осети-Аланирен, Беларуçран килнĕ хăнасем тата хамăр тăрăхри çĕр ĕçченĕсем хутшăннă.**

Çакăнта пуçтарăннисен пысăк тухăç паракан сортсем, химин чи паха имçамĕ, минерал удобренийĕсем, çĕрулмие упрамалли, тирпейлесе апатçимĕç хатĕрлемелли çĕнĕ технологисем çинчен ытларах пĕлме май килнĕ.

Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев хуçалăхсем пĕр-пĕринпе çыхăну йĕркелессе, кăçал çĕрулми лаптăкне пысăклатса ытларах тухăç илессе шаннине палăртнă.

– Ял хуçалăхĕн ытти культурипе танлаштарсан вăл пысăкрах тупăш парать. Пирĕн Казахстана, Европăрлĕхри çĕршывсене çĕрулми сутма тĕллев лартмалла. Ăна хăпăлласах туянĕç, – тенĕ Михаил Васильевич.

Çĕрулми хакланни, çавăнпах ăна кирек хăш хуçалăхра та ытларах лартса ўстерме пуçласси, апла тăк кăçал нумайрах вăрлăх кирлĕ пуласси пирки те каланă республика Пуçлăхĕ. Çĕр ĕçченĕсен малашне те патшалăх пулăшăвĕпе усă курма пултарнине палăртнă.

Курава хутшăнакансене Çĕрулми туса илекен Лорх ячĕллĕ хуçалăхăн ăслăлăх-тĕпчев институчĕн директорĕ Сергей Жевора саламланă. Çулсерен пуçтарăнакан паха опыт "иккĕмĕш çăкăр" индустрине аталантарма пулăшнине палăртса каланă вăл.

"Çĕрулмин хальхи вăхăтри индустрийĕн инноваци аталанăвĕн малашлăхĕ" ăслăлăх-практика конференцийĕнче ЧР ял хуçалăх министрĕ Сергей Павлов хамăр тăрăхри пĕтĕмĕшле кăтартупа паллаштарнă. 2014 çулта хуçалăхсем 580 пин тонна çĕрулми пуçтарса кĕртнĕ. Кашни гектартан вăтамран 173 центнер тухăç илнĕ. Хăш-пĕр вырăнта 192-шер центнер пухса кĕртни те пулнă.

Конференцие хутшăнакансем пахаçимĕç туса илессипе çыхăннă çивĕч ыйтусене пĕрле сўтсе явнă. Суту-илў çуртĕнчех çĕрулмипе хатĕрленĕ апатçимĕçе сăйланма, ача-пăча ĕçĕсене хак пама май килнĕ.

**Мария РОМАНСКАЯ.**





ПУÇЛĂХ ЙĔРĔПЕ

# Пасар – пасарах: пĕрне пуйтарать, теприне...

**Икĕ эрне каялла республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Шупашкарти суту-илӳ предприятийĕсене çитсе килнĕччĕ. Унтанпа лару-тăру улшăннă-и? Хаксем çав шайрах-и е тата хăпарнă-и? Çак ыйтусем кăсăклантарнăран Пуçлăх çӳренĕ предприятисене тепре кайса килме тĕв турăмăр.**

Гагарин урамĕнчи Тĕп пасара çитсен Михаил Васильевич чи малтан çăкăр киоскĕ умĕнче чарăннăччĕ те – эпĕ те çав тĕлтен лăпкăн иртсе каяймарăм. Тин çеç пиçнĕскерне ыйтрăм та: "Пирĕн ирхи кăна", – терĕç хыттăнрах. Юрĕ-ха, кăнттамлăха хăнăхса çитнĕ ĕнтĕ эпир. Ăнлантăм, вĕсен малтан "киввине" сутса пĕтермелле. Юрĕ, тепĕр тесен, кăпăшка та çемçе çăкăра çиме те хушмаççĕ, хытса кайни усăллăрах. Вăт, темиçе çĕртен çурăлнă çатăркана чиксе пани тем тесен те килĕшмерĕ. Хирĕç сăмах чĕнсе вĕсен кăмăлне те, хамăнне те пăсас килмерĕ. "Дарницкий" текеннине 21 тенкĕпе туянтăм.

Михаил Васильевич иртнинче суту-илӳ речĕсен хушшипе çӳренĕ май тăварланă купăста, чечексен хакĕпе кăсăкланнăччĕ те – çав сентресем патне те çитсе килтĕм. Купăстан пĕр килограмĕ малтанхи пекех – 100 тенкĕ. Ӳстермен те, чакарман та ăна. Çветтуй Валентин кунĕ пулнăран-ши – чечек патĕнче çын йышлăччĕ. Каччăсем пикесем валли тăрăшсах хитре кĕлчечексем суйлатчĕç. Эпĕ те интереслентĕм, Голландирен кӳрсе килнĕскерĕн пĕр çыххи – 1 пин тенкĕччĕ.

Икĕ эрне каялла Михаил Васильевича пасарта хуратул кĕрпи хакĕ кăсăклантарнăччĕ, Владимир Аврелькин министр 40 тенкĕпе туянма пулнине палăртнăччĕ, анчах та тупса парайманччĕ. Халĕ те 56-60 тенкĕлĕххи кăна куç тĕлне пулчĕ. Рис кĕрпи – 49-52, вир кĕрпи – 32 тенкĕ.

Пахчаçимĕç речĕсен хушшипе те утса тухрăм. Купăста –35, çĕрулми – 30, сухан – 37 тенкĕ.

Пасарта тăпăрчă сутакан сахал. Пуçлăх хаксемпе кăсăкланса çӳренĕ вăхăтра ăна 180-200 тенкĕпе туянма пулатчĕ. "Илĕр, илĕр, çак самантпа усă курăр – халь йӳнетнĕ", – тесе ахальтен каламарĕ иккен ун чухне Михаил Игнатьев. Сутуçăсемпе калаçнă май хăшĕсем темиçе ĕне усранине палăртрĕç те – Михаил Васильевич вĕсене ырă сунса тав турĕ. Хальхинче ялтан илсе килнĕ тăпăрча туянас терĕм те, Муркаш тăрăхĕнчен килнĕ хĕрарăм пĕр килограммăшĕн 250 тенкĕ ыйтрĕ. Тĕлĕнсе пăхрăм-ши ун çине: "Халь ĕне тытма çăмăл мар, хĕрачи. Çулла кĕтӳ çӳретме ялсенче вырăн та юлмарĕ. Ак типĕ çитсенех йӳнелет, çавăн чухне туянăр", – сăмах пуçарчĕ манпа. "Республика Пуçлăхĕ умĕнче ним мар 180 тенкĕпе йăттарса яма хатĕрччĕ те, халь шел-им тата?" – терĕм те, хĕрарăм тӳрре тухма тăчĕ. "Çук-çке, ун чухне те 200-пе паратпăр терĕм-иç", – тавлашма пуçларĕ хайхи. Юнашар çу сутса тăраканни ман çине чеен пăхкаласа илчĕ-ха, эпĕ пăрăнса утнине курса вăл та пуçтарăнма тытăнчĕ. Чĕрĕ те йăрă кинеми часах мана хăваласа çитсе хулран тытрĕ. "Ан ĕнен унашкал спекулянтсене, суйрĕ вăл сана, хăй ĕне те тытмасть. Ирхине ялтисенчен 150 тенкĕпе туянса юлать те кайран 250 тенкĕпе ярăнтарать. Ух, улталанине чăтма пултараймастăп", – пĕр вырăнта тăпăртатса илчĕ хайхискер. Тахăшне ĕненмелле ĕнтĕ. Тĕрĕслĕх шыраса çӳре кунта. Пасар пасарах çав, пĕрне пуйтарать, теприне çука хăварать.

Тăпăрчă сутнă çĕртех ял çăмарти те туянма май пур. Ăна 90 тенкĕпе /теçетке/ сĕнеççĕ. Чăх-чĕп





● ПЫСĂК ЛАВККАСЕНЧЕ "ЧĂВАШĂННЕ ТУЯНМА" "ПЫСĂК ÇЫНСЕМ" УМĔНЧЕ КĂНА СĔНЕÇÇĔ.



● ПУÇЛĂХ КИЛЕТ-И Е КАЯТЬ-И – ТĂВАРЛАНĂ КУПĂСТА ХАКĔ УЛШĂНМАСТЬ.

фабрикинчен кӳрсе килнисем – 60-70 тенкĕ.

Пуçлăхпа çӳренĕ май аш-какай хакĕ йӳнелнинчен тĕлĕннĕччĕ. Пăру шăмăсăр ашне те 300 тенкĕпе сĕнетчĕç ун чухне. Хальхинче 400 тенкĕ ыйтрĕç, илсен 380-па парса яратпăр терĕç. Ун чухне пур какай çинче те хак ярлăкĕсем пурччĕ, халь хăш-пĕр тĕлте çеç асăрхарăм. Сентре умĕнче шурă калпаклă, шурă саппунлă чипер майрасене те курмарăм. Уяв тумне сентре айĕнче тытаççĕ-мĕн, ăнсăртран "пысăк хăна" килет тенине илтсен йăпăр-япăр тăхăнса яраççĕ. Пĕтĕмĕшле илсен, ĕне ашне 200-380-па, сыснанне 200-380 тенкĕпе туянма май пур.

"Уйрăм çынсен продукцийĕ те, хуçалăхсен ашĕ те пур кунта. Эпир хаксене ытлашши хăпартаймастпăр, мĕншĕн тесен хамăра та йӳнĕпе кӳрсе памаççĕ. Уйрăм хуçалăхсен, фермерсен чĕртаварĕ чылай хакланнă", – ăнлантарчĕ кунта суту-илӳ вырăнĕ тытса тăраканскер. Çапах та республика Пуçлăхĕ килессине пĕлсе цифрăсене какай патĕнче уйрăмах ятарласа улăштарни сисĕнчĕ. Эрне маларах пачах урăх хаксемччĕ.

Тĕп пасартан тухнă хыççăн "Пуçлăх çулĕпех" "Магнит" сечĕн Энгельс урамĕнчи пысăк лавккине çул тытрăм. Шупашкар эрехĕ ыттисенчен самай йӳнĕреххине кăмăллă юлнăччĕ Михаил Игнатьев. "191 тенкĕ те 90 пус" тăракан чăваш эрехне уйрăммăн темиçе ещĕк купаласах лартнăччĕ. Икĕ эрне хушшинче хаксем кунта та каялла хăпарма ĕлкĕрнĕ – чăваш эрехĕ 220 тенке çитнĕ. Кам пĕлет, тен, ярлăксенчи хаксене республика Пуçлăхĕ "Магнитран" тухса кайсанах улăштарнă? Сентресем çине: "Чăвашăнне туянăр", – тесе çырса çапнине те курмарăм – таçта çĕтнĕ? Малтан вĕсем эрех, сĕтпе çăкăр çӳлĕкĕсен тĕлĕнче пурччĕ. Лавкка палăртакан хушма хак 3-5% кăна пулин те Чăваш Ен предприятийĕсен сĕте расна хакпа сутнине тĕлĕнерех палăртнăччĕ Пуçлăх. Сĕт хутаçĕсене ятарласа тыткаласа пăхрăм – унăн хакĕ халĕ малтанхи пекех тĕрлĕрен.

Юлашкинчен Трактор тăвакансен проспектĕнчи "Сахарок" лавккана та кĕрсе тухрăм. Пуçлăх чăваш эрехне хаклăрах тенĕччĕ те, халь те нимĕн чухлĕ улшăнман: 220-230 тенкĕ. Ытти çĕрте, çавăн пекех "Магнитра" та, сахăр хакĕ 56-57 тенкĕ, кунта вара пылак çимĕçĕн 1 килограмне 49 тенкĕ те 90 пуспах туянма май пур. Кунтан йӳнĕреххине урăх нихăш лавккара та асăрхамарăм. Пасарта 52 тенкĕччĕ.

Пĕтĕмĕшле илсен, лавккасенче ассортимент пуян, анчах та – йӳнĕ мар. Тĕрлĕ çĕрте хак тĕрлĕрен. Сăмахран, пасарта çăкăра 21 тенкĕпе, "Магнитпа" "Сахарокра" 17-18 тенкĕпе туянма пулать. Сĕт те çавнашкалах: пĕрешкел пахалăхлин хакĕ 10-12 тенкĕ уйрăлса тăрать. "Халăх лавккана сахал çӳреме пуçларĕ, малтанхи пек мар. Çынсем мĕн çисе пурăнаççĕ-ши? Хаклă пулнăран сыр, тăпăрчă, улмаçырла туянма пăрахрĕç", – терĕç сутуçăсем.

**СĂМАХ МАЙ.** ЧР Экономика аталанăвĕн министерстви тата И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн студенчĕсем лавккасенчи хаксен мониторингне волонтер мелĕпе ирттерме калаçса татăлнă.

Волонтерсем куллен кирлĕ чи йӳнĕ тавар сутакан лавккасене тупса палăртĕç, вĕсене халăха пĕлтерсе тăрĕç. Пĕтĕмĕшле информацие эрнесерен ведомство сайчĕ çине вырнаçтарма палăртаççĕ.

**Пуçлăх йĕрĕпе Елена АТАМАНОВА çӳренĕ.**

Автор тата cap.ru сайтĕнчи сăнӳкерчĕксем.

СĂМАХ ПАРĂР-ХА

# Чун юрлать тейĕн

Марина ТУМАЛАНОВА

**Хĕрĕм шкултан таврăнсанах сĕтел хушшине вырнаçса ларчĕ, кĕнеки-тетрадьне кăларса хучĕ. Киле панă ĕçе çĕнĕ ручкăпа пурнăçлама пуçласшăнччĕ те... Çук, темле шырасан та сумкăра тупăнмарĕ вăл.**

**Шкул çумĕнчи лавккара хутлав таблиципе илемлетнĕ ручка сутни пирки хĕрĕм тантăшĕсенчен пĕлнĕ. Эпир канцеляри ытти таварĕпе пĕрле пĕрре мар, тӳрех виççĕ туянтăмăр ăна. Пĕрремĕш класра вĕренекенскер пурне те шкула чиксе кайнă. Тăхтав вăхăтĕнче ручкăсене ачасене кăтартнă. Паллах, виççĕшне те çухатса хăварма пултарайман вăл. Ахăртнех, ачасем коридора тухнă вăхăтра илĕртмĕш хатĕре кам та пулсан кăларса илнĕ. Япали шел мар, кирлех тĕк ăна тепре те туянма пулать. Çав ачана хăйне шел пулчĕ. Ан тив, вак-тĕвек кăна, анчах тем тесен те усал çав йăла ырри патне илсе çитермест.**

**Кун пек чухне ачасен чунне витерекен сăмах тупма та çăмăл мар. Эпĕ те çак ĕç-пуçа ахаль ирттерсе ярас мар терĕм. Калаçăва пĕр ăслайран пуçларăм. Ăна мана анне кӳршĕрен пĕчĕк календарь илсе каçсан каласа кăтартнăччĕ: "Пĕр ача малтан йĕп илнĕ. Çакна амăшĕ курмăш тунă. Кайран пысăкрах япаласем патне туртăннă унăн алли. Юлашкинчен, çăмăл машина вăрласан, йĕрке хуралçисем ярса тытнă ăна. Килтен тухса кайиччен çав çамрăк амăшĕпе юнашар ларнă. Ыталас вырăнне çут тĕнче кăтартнă хĕрарăмăн сăмсине çыртса илнĕ вăл. "Анне, хăй вăхăтĕнче мĕншĕн чармарăн мана?" – куççульленнĕ каччă". Çакăн хыççăн нихăçан та çын хатĕрне ыйтмасăр тĕкĕнмен. Пĕрремĕш класра пĕлӳ илекенсем тимлĕ итлерĕç мана.**

**"Калама вăтанатăр тăк – ручкăсене тăхтавра никам курман чухне ман сĕтел çине хума пултаратăр. Çакăншăн сире никам та ятламĕ. Çын япалине урăх ан илĕр çеç", – терĕ класс ертӳçи.**

**Халĕ шкул программинче тĕн урокĕ пур. "Пуçламăшĕ" ятлă кĕнекепе вĕренекенсем çынлăх йĕркине ăша хываççĕ, тĕрĕс пурăнма хăнăхса пыраççĕ. Йăнăш кашни утăмшăн хăçан та пулсан явап тытма тивесси çинчен те аса илтерчĕ класс ертӳçи. Пирĕн, çынсен, пĕр-пĕрне ырă тума тăрăшмалла.**

**Çук, çав кун та, эрнерен те, уйăхран та ручкăсене таварса паракан тупăнмарĕ. Ачасен чун хĕлĕхĕсене хускатайрăмăр-ши? Пурпĕр лайăххинех, шкул сукмакне такăрлатма пуçланă çав ача йăнăш тунине ăнланасса шанас килет.**

**Тепĕр кунхине ручка хакне пăхма ятарласах лавккана кĕтĕм. 20 тенкĕрен те йӳнĕрех вăл. Ăна, паллах, кашни ашшĕ-амăшĕ илсе пама пултарать.**

**Нумаях пулмасть Шупашкарти Çветтуй Татиана чиркĕвĕ патĕнчи транспорт чарăнăвĕнче тăраттăм. "Карас телефонне кам çухатнă?!" – йĕри-таврари çынсем илтмелле кăшкăрса килеççĕ хĕрсем. Ăна вĕсем çул çинче тупнă. "Çав çын инçех те каяйман ĕнтĕ", – пĕр-пĕрине калаçаççĕ хăйсем. Сас паракан пулмарĕ – таçта çитнĕ-ха вăл. Çамрăксем çийĕнчех телефона "çутрĕç" те кĕске вăхăтрах япала хуçин амăшĕпе çыхăнма май тупрĕç. Унăн тĕпренчĕкĕ, вырсарни шкулĕнче вĕренекенскер, хальлĕхе киле çитеймен-мĕн. Хĕрсем çав хĕрарăмпа тĕл пулма калаçса таталчĕç. "Пĕлетĕр-и, чун юрлать тейĕн", – пирĕн еннелле çаврăнчĕ телефон тытни. Кулать хăй. "Япала тупса пани те ăшра вырнаçайми киленӳ кӳрет иккен", – пытармасть хĕр. Çул тăршшĕпех çак саманта аса илсе пытăм, вĕсемпе пĕрле савăнтăм.**

**Алăкран шаккарĕç. Ача çуртĕнчи тĕпренчĕксене, сусăр пепкесене, сахал тупăшлă çемьесене пулăшас тĕллевпе чăмăртаннă общество организацийĕ нухрат пуçтарма тухнă. Ку хутĕнче те пĕр шухăшласа тăмасăрах пухмача укçа ятăм. Витĕр курăнакан пĕчĕк арчара 100 тенкĕллисем курăнатчĕç. Çав укçашăн никам та çука юлмĕ, пуйса каймĕ. Кама та пулсан пулăшни нимрен хаклă.**

**Чиркӳ патĕнче ватă пĕр хĕрарăм аллине тăсса тăратчĕ. Хăй каланă тăрăх, вĕсем мăнукĕпе иккĕшех пурăнаççĕ. Укçа çитменни килтен хăваласа кăларнă ăна. Çав хĕрарăма та укçа паракансем тупăнчĕç. Вăл пурне те тав туса кĕлĕ вуларĕ.**

**Вырăс предпринимателĕ Козьма Солдатенов чухăнсем валли больница уçни историе çырăнса юлнă. Халĕ вăл С.П.Боткин ячĕпе хисепленет. Азербайджан миллионерĕ Гайджи Зейналабдин хăйĕн укçипе Коран куçарттарнă, Кавказра хĕрарăмсен гимназине хута янă, театр хăпартнă. Елизавета Федоровна Мускавра приют йĕркеленĕ. Унашкал çынсем пирĕн хушăра та пур. Тĕслĕхрен, "Ачалăхшăн, ачалăх ячĕпе" ыркăмăллăх марафонĕн пухмачне çулсерен пысăк укçа пуçтарăнать.**

**Ыркăмăллăх акцийĕсем йĕркелесси тахçанах йăлана кĕнĕ. Çынна пулăшас ĕçе хамăр тӳпене хывни те – пархатар. Ырăлăх вăрлăхне кăна ача-пăча чунне вăхăтра акса ĕлкĕресчĕ.**





АМĂШĔН ХĂВАЧĔ

# Çарпа хĕрарăма çыхăнтаракан кĕпер

**Пирĕн республикăра Салтак амăшĕсен комитечĕ йĕркеленнĕренпе 20 çул çитрĕ**

**Республикăри Салтак амăшĕсен комитечĕн ертӳçипе Лариса Егоровăпа курса калаçма яланах хавас. Хальхинче юлташĕн, ĕçтешĕн Лидия Уткинăн килĕнче тĕл пултăмăр унпа. Пур çĕре те ĕлкĕрет канăçсăр чунлă Лариса Ивановна.**

**Сывлăш çавăрса илме ларнă вăхăтра телефон сас пачĕ. Çĕрпӳри 1-мĕш вăтам шкул директорĕ шăнкăравлать. Çĕршыв хӳтĕлевçин кунĕ тĕлне хĕсметри салтаксем валли парне хатĕрленĕ вĕсем. Посылкăсене çак кунсенчех çар чаçĕсене çитересшĕн. Салтак амăшĕсен комитечĕн ертӳçи ку ыйтăва хăвăртах татрĕ. Парнесене пуйăспа парса ямашкăн калаçса татăлчĕç. Питĕр тăрăхĕнче хĕсметре тăракан ентешсем çак уява, Çĕрпӳсен ыркăмăллăхне чылайччен асра тытĕç.**



Лидия Васильевна – Чечня вăрçинче пулнă Александр Уткинăн амăшĕ. Вăл Салтак амăшĕсен комитечĕн тытăмĕ мĕнле чăмăртаннине лайăх пĕлет. Малтанхи ертӳçĕпе Надежда Котьковăпа та туслă çыхăну йĕркеленĕччĕ «Чăваш хĕрарăмĕ». Комитета пулăшу шыраса килнисем халĕ те куç умĕнче. Ун чухне Çурçĕр Кавказри вăрçа пула хĕрарăмсем мĕн чухлĕ куççуль юхтарчĕç. Салтаксене укçа вăхăтра куçарса паманни – çивĕч тепĕр ыйту. Надежда Васильевнăпа унăн пулăшуçисем çар чаçĕсене çыру хыççăн çыру яратчĕç.

«Мария Лаптева ывăлне салтака ăсатнă. Кăштахранах çамрăка киле шыраса килнĕ. Ăçта çухалнă вăл? Тăрук аптăраса ӳкнĕ амăшĕ больницăна лекнĕ. Юрать-ха çăлса хăварнă ăна. Унăн ывăлĕ çар чаçне йĕркеллех çитнĕ-мĕн. Вăхăт иртнĕçемĕн Мария Лаптева та, Нина Корчагина та нумай салтака тата вĕсен тăванĕсене пулăшнă», – комитет ĕç-хĕлĕ çинчен каласа кăтартать Лидия Васильевна.

Пĕрре амăшĕсем вăрçăран документсăр килнĕ Вăрнар район каччи патне вĕçтерсе çитнĕ. Салтакран йăлтах ыйтса пĕлнĕ. «Вăл вăрçăран чĕрĕ таврăннă. Эсир ăна паспорт туса параймастăр-и?» – тархасах кайнă ун чухне Надежда Васильевна. Çакăн хыççăн ĕç-пуç хăвăртах уçăмланнă. Часах çамрăка документ илме чĕнсе илнĕ.

Надежда Васильевна Иваново облаçне куçса кайсан Елена Левченко тытнă ертӳçĕ тилхепине. Анчах пĕчĕк виçĕ мăнукне никампа хăварайманран 3 уйăхран ытла ĕçлеме май килмен унăн.

«Эпĕ комитет йышне тӳрех кĕмен. 2000 çул пуçламăшĕнче салтаксем валли пенсирен 100-200-шер тенкĕ леçсе параттăм. Ку пысăк укçа мар. Çапах та темиçе çын кăштшар парсан та пин-пин тенкĕ пуçтарăнать», – тет 13 ача амăшĕ Лариса Егорова.

Вăл, чăнах, пуринпе те пĕр чĕлхе тупма пултарать. Çавăнпах республикăри салтак амăшĕсене çар чаçĕсенче те ăшшăн кĕтсе илеççĕ.

Пĕлтĕр, тĕслĕхрен, Смоленскри çар чаçĕнчен тĕлĕнсе таврăннă Лариса Ивановна. «Пире салтаксемпе пĕрле столовăя илсе кайрĕç. Унта 3-шер тĕрлĕ салат, яшка хатĕрленĕ. Какай та, пулă та сĕнеççĕ. Мана пурне те кăштшар хурса пама ыйтрăм. Ыттисем суйласа çиме пултараççĕ», – тет вăл. Салтак амăшĕсене апат килĕшнĕ. «Эпир килнĕрен тутлă çитерчĕç-и сире?» – çар чаçĕнчен тухиччен кăсăкланнă хĕрарăмсем. «Çук, пире яланах çапла апатлантараççĕ», – çирĕплетнĕ салтаксем.

Кăçал амăшĕсем Мускав облаçĕнчи çар госпиталĕсенче пулнă, салтаксене парнесемпе хавхалантарса хăварнă. Балашихăри çар чаçĕнче те вĕсем – кĕтнĕ хăнасем. Унта хĕрĕхе яхăн ентеш хĕсметре тăрать.

Çакăнтах пĕр салтакăн ашшĕ шăнкăравласа янă. Ăна ывăлĕ парне хăварни çинчен пĕлтерме ĕлкĕрнĕ иккен. «Çак самантра унран пысăкрах савăнăç та çук уншăн», – тав тунă вăл Лариса Ивановнăна.

«Ашшĕсĕр, амăшĕпе кăна çитĕнекен çамрăксене çарта йывăртарах. Вĕсем çывăх çыннисене çийĕнчех чĕнсе яраççĕ», – пытармасть комитет ертӳçи.

Хăш-пĕр пăтăрмах çинче те чарăнса тăрас килет манăн. Пĕрре çапла амăшĕсем Чечняна тухса кайнă. Пĕри салтаксене видео тата сăнӳкерчĕ. Киле йĕркеллех çаврăнса çитнĕ вĕсем. Хайхи çав амăшĕ видеокассетăсемпе сăнӳкерчĕксене сутма пуçланă, илес кăмăллисенчен пысăк укçа ыйтнă. «Салтак амăшĕсен комитечĕ нухрат пуçтармалли май тупнă...» – республикипех усал çакнашкал хыпар сарăлнă. Ывăлĕсене çара ăсатнă хĕрарăмсем умĕнче çав тери аванмарланнă комитетра тăрăшакансем. «Эпир йăлтăх тӳлевсĕр салатса паратпăр», – ăнлантараççĕ Лариса Ивановнăпа Лидия Васильевна.

Тепрехинче пĕр арçын Çурçĕр Кавказа çыру парса янă. Ăна салтака аллинчен тыттарма хушнă. Шала мĕн чикнине каламан. «Çав салтакпа курнăçма май пулмарĕ. Тусен хушшинчен çар чаçне килеймерĕ вăл. Эпир, паллах, çырăва уçса та пăхман. Каялла таврăнсан салтаксен тăванĕсемпе тĕл пултăмăр. Хайхи çав арçын пирĕнпе кăмăлсăр калаçрĕ. Эпĕ çырăва каялла патăм. Вăл конвертран кăларса пин тенкĕлĕххисене шутлама пуçларĕ. Манăн куç чарăлчĕ, чĕлхе çĕтрĕ...» – аса илет Лариса Егорова.

Нумаях пулмасть амăшĕсем Крымри çар чаçĕсенче пулнă. Унти лару-тăрупа паллашнă хыççăн тин лăпланнă хĕрарăмсем. Халĕ вĕсем ывăлĕсем чĕрĕ-сывă таврăнасса кĕтеççĕ.

Çулталăк пуçламăшĕнче Лариса Ивановнăн ачисем пурăнакан 2 хутлă çурт çунса кайнă. Йышпа 7 çул хăпартнă ăна. «Салтак амăшĕсемпе хутшăннă вăхăтра хамăн хуйхă çинчен те манатăп», – тет вăр-вар хĕрарăм. Вăл пурин хутне те кĕме хатĕр. Хăйне пулăшакансем тупăнĕç-ши?

**Марина ТУМАЛАНОВА.**

Автор сăнӳкерчĕкĕ.

КУРАВ

# Вĕçеççĕ Атăл çийĕн чарлансем

**Çак эрнере К.В.Иванов ячĕллĕ литература музейĕнче «Чун кĕвви» курав уçăлчĕ. Унта 5 художникăн – Анатолий Головинскин, Вагиз Камалетдиновăн, Николай Федотовăн, Виталий Яковлевăн, Анна Брагинăн – ĕçĕсемпе паллашма пулать.**

**Картинăсене пăхса çаврăннă май Муркаш районĕнчи Ильинкăна çитсе килнĕнех туйăнчĕ. Çут çанталăк илемĕ те, истори палăкĕсен хăйнеевĕрлĕхĕ те чуна çывăх. Авă ĕмĕрхи лаштра юман тӳпенелле кармашать. Бронислав Гузовский вăрманçă лартнă кедр йывăçĕ çимĕç панă. Тавралăх – чечекре. Çырма та тĕрлĕ тĕспе сăрланнă. Пĕр сукмак вăрманалла илсе кĕрет. Атăл çийĕн чарлансем вĕçеççĕ. Ав унта хĕрлĕ парăс курăнать. Такамсем кимĕпе ярăнаççĕ. Çырана хĕвел пайăркисем çутатнă. Шыв сикки куçа туртать. Юрату сăмсахĕ инçетренех курăнать.**



2014 çулти пленэра Муркаш районĕ 70 çул тултарнине халалланă. Вырăнти халăх художниксене çав тери ăшшăн кĕтсе илнĕ. Пурăнмалли вырăнпа тивĕçтернĕ. Апат пĕçерсе çитернĕ. Çавăнпах ӳнерçĕсен куллен 3-4-шар этюд ӳкерме май килнĕ. Унсăр пуçне паллă çынсемпе, историксемпе, массăллă информаци хатĕрĕсенче тăрăшакансемпе тĕл пулнă вĕсем. Художниксен ĕçĕпе ачасем уйрăмах кăсăкланнă. Ахальтен мар лара-тăра пĕлменскерсем вĕсен тавра чупса çаврăннă.

– Ялти пĕр хĕрарăмпа паллашма тӳр килчĕ. Унăн пурнăçĕ çинчен ыйтса пĕлтĕм. Çакăн хыççăн 77 çулти ватăн портретне ӳкерме шухăш çуралчĕ. «Шурă тутăр çыхмаллачĕ. Хитре тумланмаллаччĕ», – хыпăнса ӳкрĕ хĕрарăм. Эпĕ унăн çи-пуçне кăтартма тĕллев тытманнине палăртрăм. «Мана нихăçан та никам та ӳкермен», – куçран пăхрĕ вăл. Картинăна çав хĕрарăма парнелеме те хирĕç мар, – кураври хăйĕн ĕçĕ патĕнче чарăнса тăчĕ Николай Федотов.

Плэнера йĕркеленĕ Анна Брагинăна вара ĕçтешĕсем темиçе те ӳкернĕ. Хальхи кураври «Анна портречĕ» картина авторĕ – Вагиз Камалетдинов. Унăн тепĕр ĕçĕнче Головинский художнике палласа илме пулать.

– Çакнашкал çулçӳрев пире çывăхлатать. Эпир хамăр картинăсем урлă çитĕнекен ăрăва тăван тăрăха юратма вĕрентетпĕр, – терĕ Чăваш художникĕсен пĕрлĕхĕн ертӳçи Валентин Федоров. Пленэр кашнинех аталанма пулăшнине палăртрĕ вăл.

«Эпир мĕншĕн çав тăрăхра пулман-ши?» – çакнашкал шухăш çуралнине палăртрĕç курава килнисем.



Художниксем кăçал та хăйсен картинисенче Муркаш район çут çанталăкне, çыннисене кăтартасшăн. Ку ĕçе вырăнти çамрăк ӳнерçĕсене явăçтарасшăн.

Сăмах май, çак картинăсен куравне малтан Ильинкăра, Муркашра, Наци библиотекинче те йĕркеленĕ. Çитес вăхăтра Çĕнĕ Шупашкарсем те художниксен ĕçне хак пама пултарĕç.

**Марина ГРИГОРЬЕВА.**

Автор сăнӳкерчĕкĕсем.

ЫЙТĂМ

# Салтак пăтти мĕн тути?



**Февралĕн 23-мĕшĕ – Çĕршыва хÿтĕлекенсен кунĕ. Ăна арçынсен уявĕ пек йышăнма хăнăхнă эпир. Ара, «арçын», «çĕршыв» тесен куç умне тÿрех салтак тухать-çке. Салтак пăтти мĕн тути-ши? Çак ыйтупа республикăри паллă арçынсене чăрмантартăмăр.**

**Александр КОЧУРОВ, ЧР çар комиссариачĕн Муркашпа Элĕк районĕсенчи уйрăмĕн пуçлăхĕ:**



– Пăтти, тĕрĕссипе, тĕрлĕрен пулать: тутлă та, йÿçĕ те, тăварлă та, пылак та. Пурнăç пекех. Пĕтĕмпех ăннă чухне лайăх вăл, кăлтăк сиксе тухсан – япăх. Çара пурнăç шкулĕпе ахальтен танлаштармаççĕ вĕт. 34 çул салтак ĕнтĕ эпĕ. Пуçăмра ытларах курсант çулĕсем çырăнса юлнă. Халĕ, вăхăт иртнĕ май, çамрăк туссене, Хусанти танк училищинче вĕреннĕ çулсене чылай аса илетĕп. Пĕрле вĕреннисем те, çапăçура юнашар тăнисем те, вилнĕ юлташсем те асăмрах. Çарта пулнă çулсем кăмăл çирĕплĕхĕпе та палăрса юлаççĕ. Санпа юнашар шанчăклă та çирĕп туссем, кирлĕ чухне сана хÿтĕлеме хатĕрскерсем пуррине пĕлни çирĕплĕх, хавхалану, хăват хушать. Вĕсем сана пăрахмаççех, çурăмран пемеççех – çакă паха.

Çар комиссариатĕнче ĕçленĕ май куратăп – призывниксем пурте тенĕ пекех салтака хăйсен ирĕкĕпе каяççĕ. Савăнтарать ку. Унтан-кунтан пĕрерĕшĕ, хăвалама тивекенни, тупăнать паллах. Çамрăксем хăйсен тивĕçне ăнланни, пурнăçлама ăнтăлни кăмăла хăпартатех. ЧР çар комиссарĕ пулнă Александр Кухарчук калани яланах асăмра: «Хăйне хисеплекен арçын пĕрре те пулин çар комиссариатĕнчен тухмаллах», – тетчĕ. Килĕшетĕп унпа.

**Вячеслав ТРОФИМОВ, ЧР Патшалăх Канашĕн Аппарачĕн ертÿçин заместителĕ:**



– 1984 çулта ЧПУна вĕренме кĕтĕм, çулталăкран салтака илсе кайрĕç. Çапла 87-мĕш çулччченех службăра авиацире тăтăм. Малтанах çамрăк специалистсене Ленинград облаçĕнчи Пушкин хулинчи авиаци шкулĕнче хатĕрлерĕç. Унтан тÿрех Смоленск облаçне илсе кайрĕç. Шаталова–1-ре Миг-23 истребительсем вĕçетчĕç. Эпĕ, радиоэлектроника енĕпе хатĕрленнĕскер, ыттисемпе çак самолетсене пăхаттăм-юсаттăм.

Пĕррехинче, январĕн 12-мĕшĕччĕ ун чухне, мĕнпур хатĕрсемпех пысăк Ил самолета тиерĕç те таçта илсе кайрĕç. Пĕтĕмпех кинори пек. Хамăрпа юнашарах – техника. Ăçта кайнине çеç пĕлместпĕр. Пушхирсем, тинĕссем юлаççĕ айра. Чухлатпăр-ха, туятпăр: Афган енне çул тытатпăр. Çапла Туркменистанри Мары хулине антăмăр. 35-36 градус сивĕре пуçтарăннăччĕ эпир. Çавăнпах çăматăсем, бушлат тăхăннă. Кунта вара – çулла, шăрăх. Чăтмалла мар шыв ĕçес килет. Анчах вĕретмесĕр усă курма юрамастчĕ. Çакна та каламалла: çитсе чарăнсан пирĕн пата пĕр çамрăк лейтенант чупса пычĕ те: «Чăвашсем пур-и?» – тесе ыйтрĕ. Çапла мана çуллахи тумпа: атăпа, шлепкепе тата ыттипе – тивĕçтерчĕ. Шăмăршă районĕнченччĕ вăл. Шел, ятне-шывне астуса юлман, салтакран таврăнсан та тав тăваймарăм. Çапла кунта 3 эрне яхăн самолетсем вĕçтертĕмĕр – истребительсем муляжсемпе вăрçăлла «вылярĕç». Икĕ çулта тĕрлĕ самолет-вертолетпа вĕçнĕ. Тĕрĕссипе, халĕ вĕсене сасăранах уйăратăп. Шупашкарти аэропорта анса хăпаракан çар техникине куç хупса «паллатăп». Истребительпе çеç вĕçсе курман. Унта хăйне евĕр чăтăмлăх, хатĕрленÿ кирлĕ.

Салтакра кашни арçыннăнах пулмалла тетĕп. Юлташ та хĕсметре палăрать – кантăк витĕр курăннă пек. Тепĕр чухне юлташ-юлташ тетпĕр, çывăх тус вырăнне хуратпăр. Салтак атти тăхăнсан çеç кам чăн юлташ иккенни уçăмланать. Салтак пăтти çисе çеç арçын чăннипех пиçĕхет, кăмăлĕпе çирĕпленет. Салтакра пĕрле пулнă туссемпе халĕ те çыхăну тытатпăр. Уйрăмах Слава Федорова аса илмелле. Канашран вăл. Училище хыççăнах тĕл пултăмăр та салтакра икĕ çул пĕрле ирттертĕмĕр.

**Владимир ЛЕОНТЬЕВ, юрăç:**



– Эпир вĕреннĕ вăхăтра патриот туйăмĕ кашни ачарах пулнă. Шкул çулĕсенче питĕ çара каяс килетчĕ. Вунсаккăр тултарсан мана та повестка пачĕç. Салтака юрăхлă пулнишĕн çав тери савăнтăм. Эпĕ вăл вăхăт тĕлне Вăрмарти автошкултан вĕренсе тухма ĕлкĕрнĕччĕ. Туркестан çар округĕнче иртнĕ икĕ çула епле манăн? Çак кунсенче Интернетра пăхкаласа лартăм та – паллă вырăнсене пачах курмарăм, Небитдаг хули йăлт улшăннă. Салтака çĕнĕрен кайма ят тухсан хама çав тĕлех яма ыйтăттăм.

Каракум пушхирĕнче хăйăрсăр пуçне нимĕн те çук. Манăн вара атăпа юр çийĕн кăчăрт-кăчăрт туса утас килетчĕ. Икĕ çул пачах та хĕл курман эпĕ. Çĕрле те çывăрма çук пăчăччĕ. Вырăс хĕлĕшĕн мĕнешкел тунсăхласа таврăннăччĕ яла. Тен, çавăнпах-и, питрен чĕпĕтекен, шартлама сивĕ кунсене юрататăп эпĕ. Салтак пăтти çимесĕр чăн-чăн арçын пулма çук. Ăна этемлĕхĕн вăйлă çуррин пурин те тутанса курмалла.

**Герман ЖЕЛТУХИН, писатель, журналист:**



– Ах, Тур, Тур, пĕрремĕш эрнинче вăл пăтă тутиех калать-ха, аванах анать. Иккĕмĕш эрнере чĕлхе айне кĕрет, шăл хушшинчен ниепле тухса пĕтмест. Виççĕмĕш эрнинче вара çăвар маччине çыпăçсах ларать. Тăваттăмĕшĕнче пĕчĕк чĕлхе пăтта тытса чарать, кашăкпа чышсан та анса каймасть. Çапларах вăл салтак пăтти, калама çук «тут-лă-ă-ă». Малтанхи çул мĕскĕн салтакне сахăр та лекмен, типĕ пăттине шывпа лĕпĕртеттерсе çăткаланă. Командир «Строя» тесе кăшкăратчĕ те пушанма ĕлкĕреймен чашăк сĕтел çинчех ларса юлатчĕ.

Ферганара картишне тухсан ашаксем мĕкĕретчĕç, виçĕ çул кайăк сассине илтсе те курман. Десантник пулнă эпĕ, халĕ те тĕлĕкре парашютпа сикме пăрахаймастăп.

Салтакра та япăх марччĕ, студент çулĕсем тата та хитререхчĕ. Çапах та çарта пулмаллах. Салтак пăттине çимен арçын арçын та мар.

**Василий КЕРВЕН, поэт:**



– Пирĕн ялта салтака кайман арçынна çын шутне кĕртмен. «Çĕршыв умĕнчи парăма татмалла, салтака юрăхлă пулмалла», – тетчĕ анне. Çак сăмахсене пĕчĕкрен илтсе ÿснĕ. Тин çеç çут тĕнчене килнĕ арçын ачана: «Салтака юрăхлă пул», – тесе çăватчĕç.

Эпĕ ачаран спортпа туслăччĕ. Асаттен сунарçă йĕлтĕрĕпе хамăр таврари мĕнпур вăрмана çаврăнаттăм. Турник çинче туртăнасси, çаврăнасси те вăйă вырăнне кăначчĕ. Чупассипе те хыçалта пулман. Ачаран пилĕк авса ÿсни кайран пурнăçра чăн та пулăшать иккен. Эпĕ те пĕчĕккĕллех Упамса вăрманне кĕрепле-сенĕк йăтса чупнă, каярах тар тăкса утă çулнă.

Çар ретне тăрсанах ултă уйăх сержантсен шкулĕнче вĕреннĕ. Унта эпĕ нимĕнле йывăрлăх та туйман. Пĕр каччă чăтайманнипе перĕнсе вилни халĕ те асрах. Хула ачиччĕ вăл, интеллигент çемйинчен. Çамрăк музыкантăн çапах хăй çине алă хумалла марччĕ. Нивушлĕ икĕ çула чăтса иртерме çукчĕ? Çыннăн темĕн тесен те хăйĕн пирки çеç шухăшламалла мар. Вăл вилсе вырте, ашшĕ-амăшĕ, йăмăкĕ-шăллĕ çав хуйха епле чăтса иртерчĕç-ши? Тем тесен те кахал та нишлĕ, вăйсăр пулмалла мар арçыннăн.

Эпĕ командир пулнă май мĕнпур Совет Союз тăрăх çаврăннă. Салтаксем илме кайса вунсакăр кун пуйăс çинче çÿреттĕм. Кавказран Инçет Хĕвелтухăçне мĕн чухлĕ хутламан-ши! Калама çук телейлĕ те ырă вăхăтсемччĕ! Яппун тинĕсĕнче шыва кĕнĕ. Владивостокри юманран та çÿллĕ тирексем халĕ те куç умĕнчех, ун пеккине урăх ниçта та курман. Тĕлĕнмелле пуян хулаччĕ, Мускавра çуккине те тупса илме пулатчĕ вăл вăхăтра унта. Тĕлĕнмелле хитре çав тăрăх, курса киленмелĕх пур. Инçет Хĕвелтухăçĕнчи çăра лианăсемпе хупланнă сăрт-ту хушшинче пĕчченех çÿреттĕм. Тигрсем туртса çурасран хăрама та пĕлмен. Украинăри Харьков хули калама çук илемлĕччĕ. Çар ретне тăман пулсан эпĕ çав вырăнсене хăçан кайса куратăмччĕ-ха?

Юлашкинчен çакна палăртса калас килет. Туслăччĕ ун чухне пирĕн халăх, нихăшĕн хушшинче те хальхи пек хирĕçÿ, вăрçă-харçă çукчĕ. Украинсем, литвасем, Казахстанри нимĕçсем – тĕлĕнмелле лайăх, ырă кăмăллă çынсемччĕ. Нихăш халăха та хурламалла мар, хăçан та пулсан туслăх таврăнатех.

**Геннадий КИРИЛЛОВ, артист:**



– Салтак пăтти халь те асрах. Тутлă, питĕ тутлă вăл. Икĕ çул çинĕ ăна. Прибалтикăра авиацире хĕсметре тăнă эпĕ, çар самолечĕсене юсанă. Салтака кайса килни чун-чĕрене çирĕплетрĕ, йывăрлăхсене çĕнтерме вĕрентрĕ. Манăн икĕ ывăл, аслине хырăмлăх чирĕпе аптранăран çара илсе каймарĕç. Кĕçĕнни эпĕ çинĕ пăтта астивсе курасшăн-ха.

**Татьяна НАУМОВĂПА**
**Елена АТАМАНОВА калаçнă.**



## ЫРКĂМĂЛЛĂХ КĔТЕСĔ



*Хисеплĕ вулакансем! Асăрхарăр-и? Хаçатра "Ыркăмăллăх кĕтесĕ" уçма шухăшларăмăр. Ахăртнех, килте нумайăшĕн кивĕ е усă курман ытлашши хатĕр-хĕтĕр /сĕтел-пукан, ача-пăча çипуçĕ.../ пур, вĕсене пирĕн хаçат урлă вырнаçтарма май килĕ. Çынна ырă тума, пулăшма васкакансенчен пĕлтерӳсем кĕтетпĕр. Телефон номерне тата хăвăр ăçта пурăннине кăтартма ан манăр.*

**●Çуллахи чечеклĕ костюм. 48-мĕш размер. Хĕрарăм валли.**
**●Хĕр-хĕрарăм валли юбкăсем. 48-мĕш размер. Тел.: 8-905-342-44-72.**

*Асăрхăр! Çак япаласене ахалех, укçасăрах, паратпăр.*

*Пĕлтерӳсене те – эсир çав япаласене ахалех пама хирĕç мар пулсан – хаçата тӳлевсĕрех вырнаçтаратпăр. Ыйтусем пулсан редакци телефон номерĕсемпе шăнкăравласа пĕлмелле.*

## АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР



### Купăста салачĕ

**1 хĕрлĕ кăшман, 1 кишĕр, 300 грамм купăста, 1 пылак пăрăç, 1 йӳçкăшман, 1 шăл ыхра, пуçлă 1 сухан, тăвар, сахăр, уксус, тип çу кирлĕ.**

Купăстана вĕттĕн турамалла. Кишĕре, йӳçкăшмана, хĕрлĕ кăшмана теркăламалла. Ыхрана вĕтетмелле. Сухана – çурма çаврашкан, пылак пăрăça пĕрчĕлесе касмалла. Пахчаçимĕçе сахăрпа, тăварпа, уксуспа, тип çупа пăтратмалла. Салата симĕс суханпа, укроппа илемлетме юрать.

### Редиспа, мăйăрпа

**2-3 редис, 1 хăяр, 2 киви, 2 апат кашăкĕ кавăн вăрри, вĕтетнĕ 2 апат кашăкĕ аçтăрхан мăйăрĕ, 1 апат кашăкĕ олива çăвĕ кирлĕ.**

Редиса, хăяра, кивие тăваткалласа турамалла. Çимĕçсене кавăн вăррипе, олива çăвĕпе пăтратмалла. Çиелтен аçтăрхан мăйăрĕ сапмалла.

### Кăмпа пловĕ

**1 стакан рис, 300 грамм шампиньон, типĕтнĕ 40 грамм кăмпа, пуçлă 2 сухан, 2 кишĕр, тăвар, тип çу кирлĕ.**

Типĕтнĕ кăмпана тăварлă шывра 1 сехет шӳтерсе пĕçермелле. Вĕттĕн туранă кăмпана тип çупа ăшаламалла, çурма çаврашкан каснă суханпа теркăланă кишĕр хушмалла. Рис, кăмпа шывĕ ямалла. Шыв вĕресе пĕтсен çулăма сӳнтерме юрать.

## ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ

# Шăлĕсене шутлаççĕ

**Пирĕн килте нихăçан та мăйракаллă шултра выльăх пулман. Иртнĕ çул пĕтĕ ĕне туянтăмăр. Вăл кĕçех пăруламалла, анчах пăрăва мĕнле пăхмаллине пĕлместпĕр.**

**ГАЛИНА.**
Вăрмар поселокĕ.

Пăрăвăн çăварĕпе сăмсине тӳрех таса татăкпа лăймакаран тасатмалла. Кăвапа вĕçне йод янă стакана чиксе кăлармалла.

Унтан пăрăва лайăх шăлса типĕтмелле те амăшĕ çумне хумалла. Амăшĕ ăна чĕлхипе çулласа юлнă лăймакасенчен тасатать, тирне тата лайăхрах типĕтет. Çапла туни тин çеç çут тĕнчене килнĕ пăрăва çĕнĕ «лару-тăрăва» хăвăртрах хăнăхма пулăшать. Çуллани амăшĕшĕн те усăллă: çакă ăна хăвăртрах хыçĕнчен хăтăлма, амалăхне пĕрĕнме пулăшать.

Кăштахран пăрăвăн шăлĕсене шутласа пăхăр. Йĕркеллĕ аталаннин çăварĕнче 3 мăшăр кайри шăл пулмалла, унсăр пуçне тата 8 шăл. Енчен те кайрисем тăваттă е сахалтарах пулсан – пăру лайăххах аталанса çитеймен. Тепĕр чухне çитмен шăлсем кăшт каярах тухаççĕ. Кирек епле пулсан та çакнашкал пăрăва уйрăмах лайăх пăхмалла – ун пеккисем ыттисенчен



ытларах чирлеççĕ, начартарах ӳсеççĕ. Тĕрĕс, йĕркеллĕ пăхни вара лайăх аталанма, ӳсме пуçлать.

Шăлĕсене шутланă хыççăн пăрăва чĕпĕтсе илме те юрать. Нерв тытăмĕ лайăх аталаннă пулсан пăру кăшт чĕпĕтнипех ура çине сиксе тăрать.

Пĕчĕкскершĕн сĕт шеллемелле мар. Амăшĕн сĕчĕпе вăл хăвăртрах çитĕнĕ, тĕреклĕрех те пулĕ.

# Пахчаçимĕçпе чечек акмалли уйăх календарĕ

| Уйăх | Нарăс | Пуш | Ака | Çу | Çĕртме | Утă | Çурла | Авăн | Юпа |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Пахчаçимĕç | Акма ăнăçсăр кунсем | | | | | | | | |
| | 18-20 | 19-21 | 17-19 | 17-19 | 15-17 | 15-17 | 13-15 | 12-14 | 12-14 |
| | Акма ăнăçлă кунсем | | | | | | | | |
| Суханлă чечек | 12-13 | 8-9, 16 | 6,14-15 | 3,10-12,14 | 12-13 | 3-5, 8, 10, 31 | 1,4-6, 9, 10, 29 | 1-3, 6, 7, 29, 30 | 2-3, 27, 30 |
| Вăрăллă чечек | 25-27 | 2,24-26,29-30 | 21-22, 25-26 | 20, 23 | 19-20, 29-30 | 27-28 | 23-24 | 19-20, 27 | 16-17, 25-26 |
| Тăрăхла кавăн, патиссон, кавăн | 21-22, 25-27 | 1-2, 25-27, 30 | 3, 21-26, 30 | 1-3, 20-23, 27-30 | 1, 18-20, 24, 29 | 1, 27-28 | 23-24 | 19-20, 27 | 16-17, 25-26 |
| Çарăк, тутлă кăшман | – | 12-13, 14-17 | 5-9, 11-14, 16 | 5-6, 7-10, 14-15 | 3-7, 12, 14 | 14, 12-13 | 1, 3-5, 8-12, 31 | 1, 4-6 | 6-7 |
| Пăрçа йышши культурăсем | 25-27 | 24-30 | 3, 21-26, 30 | 1-2, 20-23, 28-31 | 1, 19-20, 28-30 | 1, 28-29 | 23-24, 27 | 19-21, 27 | – |
| Çĕр çырли | 21-22, 25-28 | 2, 24-27, 30 | 3, 21-22, 24-26, 30 | 2, 20, 23, 27-28 | 1,18-20, 27-30 | 25-29 | 18-21, 23-24 | 18-20, 24-25, 27 | 16, 25 |
| Купăста, спаржа | 25-28 | 1-2, 25-28, 29-30 | 3, 22-24, 25-26, 30 | 2-3, 20-21, 23, 30-31 | 1, 29-30 | 1,27 | 18, 22-23 | 20 | – |
| Çĕрулми | 12-14 | 11-13, 16-17 | 6-9, 14, 16 | 5-11, 14-15 | 3-4, 11-12, 14 | – | 4-5, 9-10 | 29 | 1-3, 29-30 |
| Симĕс сухан | 22, 25-27 | 2, 24-27, 29-30 | 3, 21-23, 25-26 | 1-2, 20-23, 27-30 | 1, 18-20, 24-27, 29 | 1, 21-24, 27-29 | 17-23, 25-26 | 18-20, 25, 27 | 15-17, 25-26 |
| Пуçлă сухан | 7-16 | 6-16 | 5-9, 10-13, 16 | 5-10, 14-15 | 3, 10-11 | 3-4, 8-9 | 4-5 | – | 1-2, 29-30 |
| Кишĕр, пастернак | 13-14, 16-17 | 6-9, 12-13, 17 | 8-11, 14, 16 | 5-11 14-15 | 3-4, 11-12 | 12-13 | – | – | – |
| Хăяр, арпус, дыня, куккурус | 21-22, 25-28 | 1-2, 24-27, 29-30 | 3, 21-26, 30 | 1-3, 21-23, 27-31 | 1, 18-20, 28-30 | 27-29 | 23-26 | 18-21, 27 | 15-17, 18-21, 25-26 |
| Пылак пăрăç, баклажан | 21, 25-28 | 1-2, 24-30 | 3, 21-26, 30 | 1-3 20-21, 23, 30-31 | 1, 19-20, 28-30 | 27-28 | 23-24 | 19-20, 27 | 15-18, 25-26 |
| Çулçăлăх петрушка | – | 2, 24-27, 29-30 | 3, 21-23, 25-26, 30 | 1-2, 20-23, 27-30 | 1, 18-20, 28-30 | 1, 26-28 | 22-24 | – | – |
| Хĕвел çаврăнăш | 25-28 | 1-2, 24-27, 29-30 | 21-25, 30 | 2-3, 20-23, 27-30 | 18-20, 26-30 | – | – | – | – |
| Редис, йӳç кăшман, дайкон | 9-14, 15-16 | 8-10, 12-13, 15-16 | 5-6, 8-13, 16 | 5-6, 8-11, 14-15 | 3, 11-12, 14 | 4, 12-13 | 1, 3-5, 8-12, 31 | 17-20, 27 | – |
| Салат, шпинат | 22, 26 | 1-2, 25-26, 28-29 | 3, 21-22, 24-26 | 1-3, 20, 22-23, 28-30 | 1, 19-20, 25-27, 29-30 | 1, 27-28, 30 | 17-20, 23-24 | 15-17, 19-20, 27 | 16-17, 25-26 |
| Хĕрлĕ кăшман | – | 6-16 | 5-14, 16 | 5-10, 14-15 | 3-6, 10-12, 14 | 4, 8-9, 12-13Ç | – | – | – |
| Сельдерей | 8-17 | 7-17 | 5-14, 16 | 6, 14-15 | 3, 10-12, 14 | 12-13 | – | – | – |
| Помидор | 21-22, 25-28 | 1-2, 24-30 | 3, 21-26, 30 | 1-3, 20-23, 27-31 | 1, 18-20, 24-30 | 1, 21-30 | 17-28 | 15-25, 27 | 15-22, 25-26 |
| Укроп, кинза, сар пăрăç | 26-27 | 2, 24-27, 29-30 | 3, 21-26, 30 | 1-3, 20-23, 28-30 | 1, 18-20, 25-27, 29-30 | 1, 22-24, 27-28, 30 | 23-24 | 19-20, 27 | 16-17, 22, 25-26 |
| Йӳçĕ пăрăç | 15-16 | 14-15 | 10-12 | 7-9 | 4-5 | 1-2, 29-30 | 25-26 | 21-23 | 18-20 |
| Ыхра | 10-15 | 6-9, 12-13, 15-17 | 5-14, 16 | 5-11, 14-15 | – | – | – | 1, 4-10, 29 | 1-7, 11, 29-31 |



ÇЫРУ ÇЫРТĂМ ВАСКАСА

# Авланас теменччĕ те...

26 çулта çеç пулин те хама читлĕхе лекнĕ мĕскĕн кайăк пекех туятăп халĕ. Ăçта каятăп, ăçтан таврăнатăп, арăмпа хуньăм кашни утăма сыхласах тăраççĕ. Шухă çамрăклăхăмпа ытла та ир сывпуллашма тивни пуçа ниепле вырнаçаймасть.

Эх, мана çитекен каччă таврара та çукчĕ çав. Пĕр-пĕр каçра вун-вун хĕре çавăрма, кирек хăшне ăсатма пултараттăм. Пĕрре кăчăк турт та – санăн пулчĕ те. Хăйсемех майăран пырса уртăнни, чеен куç хĕссе улаха чĕнни тепĕр чухне йăлăхтарса та çитеретчĕ. Чипер хĕрсем сахал марччĕ-ха, анчах та нихăшне те чун йышăнмастчĕ. Кушак çури пек ачашланнă хыççăн вăл е ку пике çинчен çав каçах манса каяттăм. Чăн-чăн юратăва паянхи кун та тĕл пулманнишĕнех телейсĕр эпĕ.

Çунатăмсем кĕтмен çĕртен хуçăлни пирки сирĕн пата çырса чуна лăплантарма шухăшларăм.

Пĕр ирхине ялти нихăш каччăна та тиркемен хĕрпе юнашар вăранса кайрăм. Шел те, тĕлĕк мар çав. "Авланмасан – куçна чавса илетĕп. Аттене систерсен тарса та пытанаймăн", – терĕ ман çине чакăр куçĕпе шăтарасла пăхса. Ăçта кайса кĕрĕн? Ашшĕ-амăшĕ çĕрме пуян унăн. Купса Петĕрĕнчен чăннипех те шиклентĕм. Кĕр мăнтăрĕпе ирĕксĕрех туй кĕрлеттерме тиврĕ. Ашшĕ полицире вăй хуни хăратрĕ, унсăрăн авланас çукчĕ-ха. Мĕнех, ялти каччăсем пÿрне тĕллесех кулчĕç. Çырмара та, вăрманта та ман арăм вĕсене нихăçан та хирĕçлемен-мĕн. Çапла кирлĕ те мана, айванккана. Эсир пĕлместĕр çеç, арçын чĕри те вутра çунать, тĕтĕмĕ тухни кăна курăнмасть. Эх, чавса çывăх та...

Пысăк сăмсаллă, шатраллă та куктĕрриллĕ, сурăх путекĕ пек кăтрашка майрапа хăнана тухма та именетĕп. Çав каç хама чарайманнишĕн, пуçа сăрапа минретнишĕн кам айăплă халь? Киле пăрăнса утнă пулсан капкăна та çакланмастăм ахăртнех.

Эпĕ ачаранах вăрăм çÿçлĕ хура пикесем çинчен куç илейместĕмччĕ. Кăтрисене асанне те чăтма пултараймасть. Женьăна пĕрре курсанах ман енне çаврăнчĕ те – чăмăрне кăтартрĕ.

Ашшĕ-амăшĕн пуянлăхĕ те кирлĕ мар мана. Кирек мĕн калăр та – чĕрене хушаймастăп. Пурăна-киле, тен, хăнăхса та çитĕп-и? Пăрахса кăна тармалла та... Кăкарнă йытă та вĕçерĕнет вĕт... Ăссăр пуçа мĕнле кăна шухăш пырса кĕмест-ши?

Каçсерен клуба тухса хĕрсемпе вальс ташлас, савнипе тÿпери çăлтăрсене шутлас вăхăт иртрĕ. Эпĕ авлантăм та, ялта чипер хĕрсем тата нумайланчĕç. Малтан ăçта пулнă-ши вĕсем? Калăр-ха, мĕн тумалла-ши манăн? Юратмасăрах мăя хăмăт тăхăннишĕн ÿкĕнсе вилетĕп. Хăçан та пулсан лăпланăпши? Тен, ашшĕ-амăшĕн пуянлăхĕшĕнех чăтмалла? Хитре хĕрсене айккинче те тупма пулĕ.

**СЕРГЕЙ.**

АХ, АНЧАХ...

# Хăналăх пурнăç

Кантăкран сивĕ çил шаккать. Килте шăп. Сехет йĕппи çеç сас кăларать. Хĕрарăм хăйĕн пурнăçне аса илет. Хушăран урама пăхать. «Часах ĕçрен упăшка килмелле. Яшка пиçнĕ», – шухăшласа илет вăл. Çав самантра шартах сикет: «Чим, ман упăшка вилнĕ-çке, вăл чĕрĕ пекех туйăнчĕ...»

Унăн мăшăрĕ 20 çул пĕрле пурăннă хыççăн чирлесе çĕре кĕнĕ. «Рак» тенĕ тухтăрсем. Мĕнешкел йывăр вăхăта чăтса ирттерме лекрĕ унăн.

Пурăннă чухне вăрçăнатпăр, тем çитмест пире. Эпир кунта хăнара анчах. Хăшĕ-пĕри питĕ хитре пурăнать, юратуллă. Вĕсене пăхсан чун савăнать. Çав хĕрарăм та юратсах качча тухнă. Çапах та кулленхи ĕç-пуçа аса илер-ха. Ачасене пăхмалла, çитермелле, тасатмалла кил ăшшине упраканăн. Çавна май упăшка валли вăхăт сахал юлать. Арçынсем вара арăмĕсене пулăшмалли çинчен мансах каяççĕ. Йывăрлăх хĕрарăм хулпуççийĕ çине тиенет. Хăш чухне çамрăк мăшăрсенчен тем те илтме пулать. «Пĕр тĕслĕ яшка йăлăхтарать», – теççĕ пурнăç тути-масине ас тивменскерсем. Ашкăнаççĕ хайхисем. Тĕнчере хĕрарăм нумай имĕш. Шухăшсăр пурнăç астарать-ши вĕсене? Турăпа, çемьепе пĕрле пурăнмалла. Ĕçчен чăваш хĕрарăмĕ, чăн та, чăтăмлă.

Татах шухăша каять вăл. Итлемерĕ ăна упăшки, çамрăклăх пирус туртрĕ, эрех ĕçрĕ, пушă вăхăта ют хĕрарăмсем патĕнче ирттерчĕ. Анчах саккунлă арăмĕ çемьене аркаттармарĕ. «Тавтапуç сана манпа пĕрле пурăннăшăн, мана чăтнăшăн, ачасене ÿстерсе вĕрентсе кăларнăшăн, тĕрĕс çулпа утнăшăн», – виличчен каçару ыйтнă арçын.

Пурнăçа каялла тавăрма çук. Çамрăк мăшăрсене калас килет: пур юрату тĕнчере. Ăна упрама пĕлмелле. Çирĕп тытăр çемье тилхепине. Турăпа пĕрле пулăр. Юратăр мăшăра, ачасене. Ан кÿрентерĕр хĕрарăмсене. Каялла çаврăнса ан пăхăр. Малалла утăр...

**ЛЮБОВЬ.**

ПУЛАТЬ-ÇКЕ

# Асаилÿ кĕвви

Упăшка вăтăр тултарнине тăвансемпе, туссемпе пухăнса уявларăмăр. Яшла-хĕрле çÿренĕ вăхăтсене аса илсе юлташсемпе каçхи клуба çитме тĕв турăмăр.

Канмалли кун дискотекăра халăх чылай иккен. Çамрăксем те, аслăраххисем те пур. Кам мĕнле пĕлет – çапла хиркеленет. Пирĕн пысăк ушкăн та часах юрă-кĕвĕ çеммипе килĕшÿллĕн авкаланма тытăнчĕ. Диджей паян тĕнче кĕрлеттерекен юрăсене те, темиçе çул каяллахисене те черетлерĕ. Ташлаташла тарласан лăпкă кĕвĕ кайрĕ. Мăшăрпа ыталанса вунă çул каялла таврăнма ыйтакан палланă юрăпа урай варринче çаврăнтăмăр.

...Вунпиллĕкри хĕрачаччĕ эпĕ ун чухне. Хулара вĕренекен кÿршĕ хĕрĕ канмалли кунсенче яла килсен клуба тухнă чухне мана та пĕрле чĕнетчĕ. Кĕтеруk питех ыйтнипе анне те пĕр-икĕ сехетлĕхе кăларатчĕ. Чăн та, каланине итленĕ. Аслă тусăмпа ташлаттăмăр та киле таврăнаттăмăр.

Хĕрсем йышлăччĕ пирĕн ялта, каччисем сахалрахчĕ. Çакна пĕлетăркачах савни шырама кÿршĕ ял йĕкĕчĕсем час-часах пухăнатчĕç. Çапла пĕррехинче Кĕтерука куç хывакан та тупăнчĕ. Çакăн хыççăн Петĕр пирĕн ялта тăтăшах курăнма пуçларĕ. Килĕшекен хĕре килне ăсатрĕ. Мана кичем пуласран тусне Кĕçтука илсе килетчĕ. Çапла тăваттăн уçăлса çÿресех хĕл каçрăмăр темелле.

Тĕрĕссипе, канмалли кунсене хам та чăтăмсăррăн кĕтекен пултăм. Кĕçтука курас килетчĕ. Илемлĕччĕ вăл, çÿллĕччĕ, яштакаччĕ. Кÿршĕ хĕрĕ хуларан килнĕкилменех ун патне чупса каçаттăм, клуба миçере тухасса калаçса татăлаттăмăр. Вунпĕрмĕш класра вĕренекен савниçĕн уроксем нумайран, экзамена хатĕрленмеллипе тепĕр чухне килместчĕ. Кун пек чухне Петĕртен çыру тыттарса яратчĕ, тунсăхланине пĕлтеретчĕ. Вĕренÿ эрни вăрăма тăсăлатчĕ. Çавăнпах каярах çырусене почта урлă яма та хăнăхрăмăр. Ун чухне кĕсье телефонĕсем сайра çыннăн çеçчĕ-ха. Темех те çырмастăмăр хут çине. Ытларах шкулти, килти ĕç-пуç пирки пĕлтереттĕмĕр. Çавах чун хăпартланатчĕ. Çырусем аттепе анне аллине ан лекчĕр тесех почтăна пысăк переменăра хам чупаттăм. "Паян çыру çук", – йăл кулатчĕ Марье аппа. Çавăнмалли сăлтав пур чухне: "Шел, ман пата çыракан çук. Эпĕ те хĕпĕртĕттĕм", – тетчĕ вăлтса.

Çапла çуркунне те çитрĕ. Экзамен çывхарнăран анне урама тухма текех ирĕк памарĕ. Ара, тăххăрмĕш класра вĕренеттĕм ун чухне. Кĕçтук та, шкул пĕтерекенскер, вăхăтне кÿршĕ яла утса ирттермерĕ. Апла пулин те çыру вĕçтереттĕмĕр. Вĕсене кĕнеке айне хурса вăрттăн вулаттăм. Чипер каччă урокра та асран кайма пĕлместчĕ. Хĕр тусăмсем эпĕ юратнине куратчĕç паллах. Ăмсанатчĕç. Вĕсен урама тухма та ирĕк çук-çке. Эпĕ вара клуба çÿретĕп çеç мар, савни те тупнă. Çырусене вуласшăн тимсĕлсех ыйтатчĕç – памастăм. Çывăх тантăшăма çеç кăтартаттăм вĕсене.

Часах çу кунĕсем çитрĕç, экзаменсем те хыçа юлчĕç. Кĕçтук Шупашкара вĕренме кĕчĕ. Кĕтерукпа Петĕр пĕрлех çÿрерĕç. Верук аппа та хĕрĕ кам патне тухнине пĕлсе ăна урама пĕччен кăларма текех хăрамарĕ. Çавăнпах каччă та, эпĕ чăрмантармасса пĕлсе, текехрен Кĕçтука пĕрле илсе çÿремерĕ. Сайра хутра çеç килчĕ савниçĕм тĕлпулăва.

Манăн вара ăна яланах курас килетчĕ. Унсăр тунсăхлаттăм. Çавăнпах хушăран май пулсан кÿршĕ яла хам çÿреттĕм. Е тимĕр урхамахĕпе леçме Петĕре ыйтаттăм, е клубри çамрăксем пуçтарăнса катаччи чупма кÿршĕ яла каятчĕç – вĕсемпе явăçаттăм. Кирлĕ çынна кураттăм тепĕр чухне, хушăран киле савнине тĕлпулмасăрах таврăнаттăм. Эпĕ каччă хыççăн чупнине Кĕтерук сивлетчĕ. Куншăн кÿршĕ хĕрĕ миçе хутчен ятлаçман пуль? Итлеместĕм ăна.

Пĕррехинче хамăр урамрах пурăнакан Танюш клубран чĕнсе кăларчĕ те калаçмалли пур тесе айккине пăрчĕ. Эпĕ савнипе тĕлпулма ăнтăлнине вăл та асăрханă ахăр.

– Анюк, лайăх хĕрача-çке эсĕ. Кĕçтук хыççăн мĕншĕн хăв чупатăн? Юратать пулсан хăех килет. Çамрăк-ха эсĕ, ача çеç, çавăнпах ăнланмастăн та. Кÿршĕ яла хăв çÿресе ятна çеç варалăн.



Ĕненсем. Эпĕ те сан пекех пулнă, çаплах хăтланаттăм, çакăнаттăм. Кăштах ÿсрĕм те кăмăл-туйăма, пулăмсене урăхларах хаклама вĕрентĕм. Эсĕ те хăвна ална ил, – ырă сунчĕ хайхи.

– Манăн ăна курас килет. Унăн вара килме майĕ çук, – Кĕçтука тÿрре кăларма хăтлантăм эпĕ.

– Каларăм-çке, килĕштерсен – хăех килĕччĕ. Манăн сĕнĕве шута ил. Чавса çывăх та – кайран çыртайăн. Манăн сăмахсене те пĕрре мар аса илĕн. Пурнăçра каччăсем нумай тĕлпулĕç. Сăпайлă-çке эсĕ, çак пахалăхна ан çухат, – терĕ Танюш.

"Эсĕ хăвна юратман йĕкĕт хыççăн чупнăшăн кам айăплă? Манăн пачах урăхла пулĕ", – шухăшларăм Танюш çаврăнса утсан хĕр çурăмне тинкерсе. Çав каçах Кĕçтука курассишĕн пĕлĕшĕмпе икĕ ял хушшинчи кĕпер патне уттартăмăр. Валя та кÿршĕ ял каччипе тĕлпулатчĕ. Телефонсем пурччĕ вĕсен. Хайхисем кĕпер айĕнче курнăçма калаçса татăлнă. Пĕччен утас килменрен Вова Кĕçтука чĕнме шантарнă. Ара, туссем вĕсем. Вальăна вара мана ертсе пыма хушнă. Тĕттĕммине пăхмасăр утрăмăр çапла. Машина çути курăнмассерен çул айккинче пытанатăмăр хамăр. Паллакансем курасран намăслантăмăр-ши ун чухне, е палламан арçынсем чăрăнасран шиклентĕмĕр-ши? Палăртнă вырăна çитрĕмĕр хайхи. Каччăсем килессе кĕпер айĕнче çур сехет кĕтнĕччĕ тулккăш...

Çапла çу та иртрĕ: мĕнле кăна ăташман пуль? Ăçта кăна çитмен пуль? Шухă çÿренĕ пулин те чыса çухатман вара. Чуптума та сайра хутра çеç килĕшеттĕм. Кÿреннине палăртмастчĕ Кĕçтук.

Кĕркунне çитсен хулана кайрĕ вăл. Пушшех сайра тĕл пулаттăмăр. Хĕл каçипе те темиçе хутчен çеç курнăçрăмăр. Вунултă тултарнă ятпа аттепе анне телефон парнелерĕç те хушăран шăнкăравлаттăм. Анчах Кĕçтук тытмастчĕ. Тунсăх та пĕчĕккĕнех сĕвĕрĕлчĕ. Çулталăк иртсен Танюш сĕнĕвĕ тĕрĕссине ăнлантăм. Аслисен канашне итлемеллине ăша хыврăм.

Тепĕр çăва тухсан Алюшпа паллашрăмăр. Кĕçтук пекехчĕ вăл: çÿллĕ, хура çÿçлĕ, хăмăр куçлă, анчах кăмăлĕпе пачах урăхчĕ. Тăтăшах шăнкăравлатчĕ, пĕрмай килетчĕ. Кăмăлăм та часах тепĕр кÿршĕ ял каччи енне çаврăнчĕ. Эпĕ Алюшпа хутшăннине курсан Кĕçтукăн юрату хĕлхемĕ вăйланчĕ-ши, кĕвĕçÿ çуралчĕши – улшăнчĕ вăл, хыçран чупма пуçларĕ. Анчах эпĕ ун енне текех çавăрăнса та пăхмарăм...

Мăшăрăмпа дискотекăра çаврăннă лăпкă кĕвĕпе шăпах Кĕçтукпа ташлаттăмăр та. Каччăпа ыталанса пĕрремĕш хутчен вунă çул каялла çаврăннă эпĕ. Ун чухне Кĕçтуксăр пуçне урăх никама та юратмассăн, вунă çул нихăçан иртмессĕн туйăнатчĕ. Çирĕм пиллĕке çитнине сисмерĕм те. Теçетке çул ним мар хыçа юлчĕ. Пĕрремĕш юратуран çеç нимĕн те тăрса юлмарĕ. Çак лăпкă кĕвĕ çеç аса илтерет Кĕçтука.

**ТАРУК.**

Валентина ТАРАВАТ

# Тăн кĕртрĕç

Калав



Çын тĕлĕнмелле «тирпейлĕ Кĕркури». Ăна çапла чĕнеççĕ ялта. Ара, урăхла калаймăн та. Çийĕ-пуçĕ яланах типтерлĕ. Килĕ-çурчĕ кантур пек. Картахапха таврашĕ – чăх-чĕп вĕçсе каçаймĕ. «Çын кăларса пăрахнă турпасран та ылтăн чăмакки тăвать вăл», – тет хăшĕ-пĕри ун пирки. Çак сăмахсене тĕрлĕрен ăнланма пулать. Кам-тăр кĕвĕçсе калать пуль, кам-тăр – ăмсанса, кам-тăр – мухтаса. «Хăй каяшне те пуçтарса пырĕччĕ те, çиме юрамасть», – ятлаçать хăш-пĕр чухне пĕрре урлă çуртра пурăнакан кÿрши. Лешĕ пит хăйне ĕçпе курпунлатаканни мар. Ун хуçалăхĕнче «çил вылять». Вăл нумайрах политикăпа интересленет. Пурнăçра мĕн начарри пурришĕн йăлтах влаç айăплă уншăн.

Кунĕпех пилĕкне аврĕ паян Кĕркури. Ĕнер çурса тирпейленĕ, купаласа пĕтереймен вутшанка купаларĕ. Пахча енчи купа патне çитсен ялт тÿрленсе тăчĕ.

– Ах çĕр çăтасшĕ! Каллех ураланнă ман пуленккесем?! Камне те пĕлетĕп те вĕт, анчах тытман вăрă – вăрă мар, – ятлаçрĕ вăл сасăпах.

Вăл ятлаçнине илтсе арăмĕ Пăлаки пырса тăчĕ.

– Следстви текеннине ирттермелле. Милицие чĕнтермелле пуль.

– Чĕнтернин мĕн усси? Ну, калап эп ăна кама шанманнине. Ну, каяççĕ Кахал Михали патне. Мĕн, пуленккесем çине кам патĕнчен йăкăртнине çырса хунă-им? Вăл вĕт лавпа тиесе каймасть. Паян пĕр çĕклем – пирĕнне, ыран – теприне.

– Ара çав. Нихçан та, лашапа-и, машинăпа-и вутă тиесе килнине курман. Пирĕн пекех пÿрт ăшăтса хĕл каçаççĕ, мунча та кĕреççĕ икĕ эрнере пĕрре!

– Тьфу! – лаплаттарса сурчĕ Кĕркури айккине пăрăнса. – Тытамак та тытмасть вĕт çавна, çын япалине илнĕ вăхăтра. Мĕнле тавăрас çав кахала?!

Çак кунтан Кĕркури пуçне тавăру мелне шырасси сăвай пек кĕрсе вырнаçрĕ.

– «Тăна кĕртетĕпех», – явăнать пуçра. «Кĕртмеллех», – вĕскĕртет кÿренĕвĕ.

Хĕллехи пĕр кун çĕре кăпăшка юр витсе кайнă кăначчĕ, картишне вут-шанкă илме тухнă Кĕркури пысăк ура йĕрĕсем асăрхарĕ. Вут-шанкă купи те самай чакнă. Хапхана питĕрнĕ, калитке те хупă. Пахчана тухакан алăка питĕрме маннă иккен каçхине. Хăех тухнăччĕ вăл унта каç пулттипе – çухатнă кĕреçине шыраса.

– Э-хе-хей, ватăлса пыратпăр çав, – хыçса илчĕ вăл ĕнсине. – Пăлаки! – кашкăрса чĕнчĕ арçын мăшăрне. – Пирĕн вутшанкă каллех «ураланнă». Халĕ ĕнтĕ, эс калашле, «следстви» ирттеретĕп. Пурĕпĕрех тавăратăп çав «политика».

Пахчана тухрĕ те Кĕркури ура йĕрĕсем тăрăх кайрĕ. Акă çав пысăк йĕрсем пахча урлă каçса кÿршĕ урам енелле тăсăлаççĕ.

– Так, так, так, – мăкăртатать Кĕркури, – малтанах вуттине пахча карти урлă ывăтнă ку. Акă пысăк купа йĕрĕ палăрать. Карта урлă каçнă чух хăмана ватса хăварнă. Елки-палки – сăтăрçă! Кăтартап-ха эп сана! – чăмăрпа юнарĕ вăл кахал Михалин çурчĕ енне.

Лешĕ чееленесшĕн пулнă иккен. Çулне самаях кукăртнă.

Çак вăхăтра пуçĕ темле çуталса кайнă пек туйăнчĕ Кĕркурие. «Следствие» малалла тăсмарĕ вăл. Вут-шанкă «ураланни» пирки те шавламарĕ. Арăмне те калаçма чарчĕ. Юлашки вăхăтра пахча енчи калиткине ятарласа питĕрме пăрахрĕ. Вутăсăр пуçне урăх вăрламалли çук «тирпейлĕскерен». Чăх-чĕппи хăтлă витере. Витине каçхине çăрапах питĕрееççĕ.

Кĕркури сунарлăх упранакан вунă патронтан йĕтрисене кăларчĕ те вунă пуленккене пăрапа шăтарса кашни пуленкке ăшне пĕрер патрон чикрĕ. Сăнаса пăхмасан никам та пĕлеес çук. Пуленккесене пахча енчи купара вырнаçтарчĕ

Пĕр эрне иртрĕ çапла. Çын кĕрсе çÿрени паллă пулмарĕ-ха.

Пĕр ирхине кахал Михали арăмĕ Матĕрне упăшкине тĕрткелесе вăратрĕ,

– Михала, кăмака чĕртмеллĕх пĕр пуленкке вутă та юлмарĕ

– Урамра сĕм тĕттĕм, эс мана ыйхăран вăрататăн, – кăмăлсăрланса тепĕр енне çаврăнса выртрĕ упăшки.

– Э-э-х, лекрĕ мана упăшка! Тĕнче кахалĕ, тĕнче пакăлтийĕ. Ача та тутараймарăн вĕт. Иртрĕ ĕмĕр, – хурланса шăлчĕ куççульне Матĕрне. – Сан кахаллăхна кура пĕр пенсипе нушаланатпăр. Пенсие кайма тата икĕ çул вĕт-ха. Пенсийĕ те сан пĕрре лавкана каймаллăх пулать-и, çук-и...

– Ан ларка! – кăшкăрса пăрахрĕ Михала. – Хăв мана суйласа илтĕн. Эпĕ анаткасри кăтра Лидăна саваттăм. Кăрчама ĕçтере-ĕçтере хăв енне çавăртăн. Пар кунта шăлавара!

Михала васкаса тумланчĕ те урама тухса кайрĕ. Нумай кĕттермерĕ вăл. Пĕр çĕклем вутă илсе килчĕ те кăмака умне пăрахрĕ.

Шатăртатса çунать типĕ хурăн вутти. Кăмака рехетленсе ăшшине сапалать. Ăнчĕ вĕсен çĕнĕ кăмаки. Матĕрне пĕчĕк пенсийĕнчен пуçтарсах çĕнĕ кăмака купалаттарчĕ кăçал. Маçтăрĕ лайăххи лекрĕ. Ĕçшĕн те пит нумай илмерĕ.

Чей ĕçме ларчĕç кăна, çинеçине тем шартлатрĕ те кăмака умĕ саланса кайрĕ. Вут ялкăшать

– Çунатпăр! Çунатпăр! – кăшкăрать Матĕрне. – Шыв, шыв сап!

Пăхать Михала – витрере шыв та çурри ытларах кăна.

Тавçăрулла Матĕрне вырăн çинчен хулăн утиял туртса илчĕ те çулăма хупласа сÿнтерчĕ. Хăй урайне тăсăлса ÿкрĕ те кăшкăрса ÿлеме пуçларĕ.

– Тăн кĕртрĕç мана-а-а, – пăшăлтатрĕ Михала...

## САВĂ СĔВЕМĔ



Микул ПУЛАР

* * *

Хăçан мана эс ыталатăн-ши тепре?
Çакна кĕтсе кашни кун тунсăхлатăп...
Тен, юлтăм пулĕ эпĕ тĕлĕкре?
Аса илÿпе эп çĕр каçатăп.

Сÿнмен-ха юрату манра – чунра!
Кăвар çине мĕн-ма эс шыв сапатăн?
Тупма-тăк пĕлтĕн телейне – упра!
Пĕччен юлсан сисмесĕр сарăхатăн...

Кама вăл кирлĕ – шăварман чечек?
Çак ыйтăва сана паян парасшăн.
Ÿсен-тăран ытла та вăл черчен,
Эс çаврăнса та ун çине пăхмастăн.

Кайран каю шăтсассăн ан ятла,
Хăш чух сăмах тени пулать ытла...

* * *

Сар кун пек сарă çÿçлĕ тусăм,
Тен, эсĕ килтĕн юмахран?
Кайсассăн эсĕ çепĕç туйăм
Манра çуралмĕ урăхран.

Эс пулмăн, кун çавах çут пулĕ,
Çынсем те хĕвĕшĕç çаплах.
Сар кун çĕршывĕнче мĕн юлĕ?
Пĕлтер, пĕлтер мана çакна...

* * *

Сана ман пек никам юратмĕ,
Сан кăмăлна тепри юраймĕ...
Çакна пĕлетĕн-и, савни?
Епле кĕтрет чунран савни.

Сана ман пек никам чуптумĕ,
Ачашшăн çеç, вăранас умĕн...
Çакна манайăн-ши, пĕлсем!
Нихçан та манăçмĕç вĕсем.

Ман пек никам та ыталамĕ,
Çук, ăшăтмасть юттин ытамĕ...
Асрах-ха пуль – манман пулсан,
Куç умĕнче сăнар юлсан.

Сана ман пек никам юратмĕ,
Сан кăмăлна тепри юраймĕ.
Çакна асту ялан, савни,
Çĕтмен пулсан тупа туни...

Маргарита ПРОКОПЬЕВА

### Пур-ши шанчăк

Малашлăхра пурах-ши шанчăк?
Хĕвел те анăçра пытанчĕ.
Тухатăп çул çине – кĕтетĕп,
Сан сăмахна эп ĕненетĕп.

Пĕчченлĕх – çутă кун та тĕксĕм,
Кампа халь кăмăла эп уçăп?
Пурах чунра вăй-хал та тÿсĕм,
Эсĕ çитсессĕн хирĕç тухăп.

Пĕр сас та çук, тулта та шăплăх.
Сисет чĕре – эсĕ килмерĕн.
Çамрăклăхри çак сутă туслăх
Вăй илнине эсĕ сисмерĕн.

Çак туйăма хамра упрарăм,
Анчах мана эс ăнланмарăн.
Çут ĕмĕтсем хум пек саланчĕç,
Юратнă чечексем те шанчĕç.

Ман шанчăкăм – вĕри кăварччĕ.
Çак пурнăçри хÿхлев саманчĕ
Иртми суран манра хăварчĕ,
Ĕмĕрлĕхе чĕре аманчĕ.

### Ултав

Мĕншĕн-ха улталарăн, савниçĕм,
Улăштартăн мана теприне.
Вĕçĕм кĕтрĕм сана, эп ĕнентĕм,
Шанса пурăнтăм чун-чĕрепе.

Мĕншĕн эс улталарăн, савниçĕм?
Çак суя туйăмсем, ĕмĕтсем
Чĕрере тарăн йĕр хăвараççĕ.
Курăнаççĕ салху çĕмĕртсем.

Мĕншĕн-ши улталарăн, савниçĕм,
Суяна хĕр чĕри сисетех.
Çак ултавшăн тавах, çиçрĕ çиçĕм –
Вăхăтра эп ăнлантăм веçех.

Темшĕн пулчĕ пире иккĕн тăвăр
Сарлака пурнăç çулĕ çинче?
Ултавпа суяна чăтма йывăр,
Пĕччен юлмăн-ши çул юппинче?

Вăрмар поселокĕ.

Анатолий МАКСИМОВ

### Чун пĕрчийĕпеле

Ускассийĕ енче эпир утнă ирпе,
Шкула чупнă эртелĕн-эртелĕн.
Çурăм урлă сумкки – çĕленийĕ пирпе,
Çулĕ вырткнă ялан пит кĕрлевлĕ.

«Кусçи кÿлĕ» умне шыв ансан çуркунне
Çитнĕ ушкăнпала пит хаваслăн.
Çаруранăн сикме Вăрăмсăртăн тăрне
Ир васканă каллех усă саслăн.

Тепĕр хут, тепĕр хут манăçми туссемпе
Çавăнтах çаврăнса таврăнасчĕ!..
Чун пĕрчийĕпеле – яшлăхри кавирпе –
Кăшт анчах утса çеç курайрасчĕ!..

Сĕнтĕрвăрри районĕ.



# Ольга Берггольц. Инкек урлă çыраннă шăпа



**Унăн ячĕ правительство наградисемпе е литература премийĕсемпе çыхăнман. Берггольцăн биографийĕнчи вăрттăнлăхсене пурте пĕлмен...**

Тахçанах пулса иртнĕ пек ку. 1933 çулхине сарлака хулçурăмлă арçын çамрăк арăмне пусма тăрăх çĕклесе хăпарнă – тин кăна мăшăрланнăскерсем 30-мĕш хваттерте тĕпленнĕ. Упăшка хĕрарăма пусма кашни картлашки çинче чуптунă. Лешĕ, телейлĕскер, савăнăçлăн кулнă, арçынна пусĕнчен ачашланă. Тĕнче илемлĕ туйăннă.

Ун чухне вăл çурт çĕнĕ пулнă. Хальхинче Ольга Берггольц картлашкасем тăрăх хăех хăпарнă. Çурт кивелнĕ. Унта юсав ĕçĕсем тахçанах иртмен. Хăйне алă çинче çĕклесе хăпарнă чухне хĕрарăм 23-ре пулнă, халĕ – 60. Тепĕр темиçе утăм ярса пуссанах вăл чĕри тĕлне тытса картлашка çине ларнă, хăй хăпарса çитеймессе ăнланса илнĕ.

### Ленинград блокадин символĕ

1933 çулта ăна никам та пĕлмен. Çамрăк çыравçă. Чапа тухайманскер. Ачасемпе ĕçлекенскерне çакă тивĕçтермен. Вăл пысăк пуласлăх пирки ĕмĕтленнĕ-çке. 1970 çулта вара иртнĕлĕхе паллă çыравçă çула тухнă – Ольга Берггольц блокадăна юлнă Ленинградăн чĕрĕ символĕ пулнă. Вилесемпе тулнă, арканнă, сивĕпе, выçăпа касăхнă хулара унăн сасси пĕр чарăнми тенĕ пек янăранă. Урамри хура турилккесем самантлăха та шăпланман: çынсем Нева хĕррине шыв патне аннă чухне те, хула çине бомбăсем пăрахнă вăхăтра та, чи йывăр кунсенче – çынсене алла 125 грамм çăкăр панă самантра та. Унăн сасси вăрçă тăршшĕпех Ленинградпа пулнă. Унăн сасси çĕнтерӳ символне çаврăннă.

Акă вăл – ватăлнăскер, чирлĕскер, пĕтĕм шанăçа çухатнăскер – тахçан телейлĕ пулнă вырăнта тăрать. Ольга Федоровна сумкинче валидолпа, сăмса тутрипе юнашар пĕчĕк хутаç вырăн тупнă. Унта – шăл щетки тата темиçе мăшăр колготки. Çак хутаçпа хĕрарăм темĕнле йывăрлăха та кĕтсе илме хатĕр пулнă. Кун пек самант вара хĕрарăма чылай нушалантарнă. Ватă хĕрарăм тӳрленсе тăрса тăрăшсах иртнĕлĕхе куç умне кăларма тăрăшнă – малашлăха шаннине, юратупа ачашлăха... Астăвăмра пурте чĕрĕ пек, анчах та çакă унăн паянхи пурнăçĕнче çук ĕнтĕ...

...Акă Николай йывăртараххăн та йывăртараххăн сывлама пуçлать. Ольга хăранипе куçне хупать – малалла мĕн пулма пултарасса пĕлет-çке вăл. Хватер алăкне уçса кĕрсенех арçын хăрăлтатма пуçлать, пуçне аллипе ярса илсе урайне шуса анать, унăн кĕлетки хăй тĕллĕнех турткалашать. Ольга юратнă арçынсене инкек паллă тунă тейĕн. Вĕсене хĕрарăм нимĕнпе те пулăшма пултарайман.

### Пĕрремĕшĕ тата иккĕмĕшĕ

Николай – Ольгăн иккĕмĕш мăшăрĕ. Вĕсем Ленинград университечĕн литература факультетĕнче пĕрле вĕреннĕ. Пĕрремĕш тĕлпулу хыççăнах Николай Ольăран куçне илме пĕлмен. Анчах та хĕрарăмăн упăшки пулнă. Мĕнлескер тата! Поэт! Такам ăмсанĕ. Борис Корниловăн сăввипе Шостаковичӑ кĕвĕленĕ "Не спи, вставай, кудрявая..." юрă "Встречный" фильмра янăранă. Ах, ытла ытармалла мар арçын пулнă вăл! Тĕреклĕскер, хăйĕн вăйне шанаканскер.

Хĕрача вăхăтĕнче турра ĕненнĕ, кĕлĕ вăхăтĕнче йĕрсе яма та пултарнă. Анчах та халĕ авă чиркӳсен тăррисенчен хĕрессене турта-турта антарнă. Çапла çухалнă ĕненӳ. Ун вырăнне çутă пуласлăха шанма пуçланă. Çакăн пирки кукнăра тăтăшах калаçнă-çке – кĕçех коммунизм çитĕ те çăтмах пуçланĕ.

Пĕрремĕш сăввине Оля Берггольц 16 çулта пичетленĕ. Ăна Корней Чуковский асăрханă, хĕрачан пуласлăхĕ анлă пуласса каланă. Анчах та Оля ыттисенчен нимĕнпе те уйрăлса тăман. Упăшкин пуçĕ чапа пула çаврăнса кайнă. Борис Корнилов ĕçнĕ. Ӳсĕрĕлсен çапăçнă. Кун пекки тăтăшах пулса иртнипе арçынна Писательсен союзĕнчен кăларнă. Вĕсен хĕрача ӳснĕ. Анчах та çемье пурнăçĕ ураланаймасăрах арканнă: арçын урăлса курайман, хĕрарăм урăххине юратса пăрахнă. Кĕçех Борис хĕрне арăмĕпе хăварса килтен тухса кайнă. Ольга Николайпа пĕрлешнĕ. Корнилов Рубинштейн урамĕнчи 7-мĕш çуртра вырнаçнă 30-мĕш хваттере темиçе çултан çитсе кĕнĕ. Çакăн хыççăнах ăна арестленĕ те арçын пуçĕпех таçта çухалнă. Вăл сывпуллашма кĕнине Ольга ăнланса та юлайман. Борис ытла та палăрса тăнă ыттисен хушшинче. Унăн сăввисем влаçрисене вĕчĕрхентернĕ. Унпа пурăнма та çăмăл пулман. Николай вара арăмĕ мĕн каласса кăна кĕтсе тăнă. Институт хыççăнах çемье Казахстана тухса кайнă. Унта "Советская степь" хаçатра ĕçленĕ вĕсем. Хĕсмете илсен арçын басмачсене хăваласа çӳренĕ. Пĕррехинче вăл ыттисенчен татăлса юлса тыткăна лекнине Ольга каярахпа кăна пĕлнĕ – çамрăк юман пек арçынран нимĕн те тăрса юлман, арăмĕ патне вăл инвалид пулса таврăннă.

Николай Молчанова хулпуççи таран чавса чикнĕ çĕре – вичĕ кун хĕвел питтинче шăраннă вăл. Ăна ăнсăртран кăна тупнă. Николай чĕрĕ юлнă, анчах та çакăн хыççăн ăна тытамак аптратма пуçланă. Ун чухне те, хваттере çитсе кĕрсен, арçыннăн урайне çапăнакан пуçне тытса ларнă арăмĕ, чĕлхине çыртса ан таттăр тесе шăлне хирсе уçнă, сăпка юрри юрланă – Николая лăплантарнă çакă. Ку Ольгăн тамăкĕ пулнă. Анчах та çак тамăка хĕрарăм нимĕнпе те улăштармĕччĕ...

Юрату – вăхăтлăх субстанци. Анчах та Молчановпа Берггольц юратăвĕн вĕçĕ-хĕрри пулман. Арçын арăмĕ çине çаплипех куç илмесĕр пăхнă. Ольга та ăна юратнă. Николай умĕн те, ун хыççăн та текех çакăн пек юратса курман хĕрарăм.

### Чун суранĕсем

Хĕрарăм урама тухса такси ста "Электросила" завода çул тытма ыйтнă – Ольга Берггольц завод хаçачĕн редакторĕнче 30 çул ĕçленĕ. Гонорарсемпе кăна пурăнакан çыравçăшăн шалу пĕлтерĕшлĕ пулнă. Машина хулан тĕттĕм урамĕсемпе пынă май хĕрарăм пуçĕнче шухăшсем явăннă. Малтан – турра, ун хыççăн ыттине те ĕненме пăрахнă вăл. Борисран çуралнă хĕрачи 8 çула çитиччен кăна пурăннă – чĕрепе аптăраса питĕ асаплăн вилсе кайнă. Николайран кун çути курнă хĕр пĕрчи çуталăкранах куçне хупнă. Хĕрарăм хуйха пула типсе ларнă. Арçын мăшăрне лăплантарма тăрăшнă – вĕсен татах та ача пулĕ-ха. Чăн та, çулталăкранах хĕрарăм варĕнче çĕнĕ чун тĕвĕленнĕ. Мăшăр арçын ача çураласса ĕненнĕ. Ун валли ят та хатĕр пулнă – Степка.

Ольгăна Борис Корнилов пирки кӳнтелен пек чĕннĕ. Пĕрремĕш допрос хыççăнах хырăм ӳкнĕ. Хăйĕнчен мĕн кирлине Ольга ăнланман та. Йăлтах вĕсене кирлĕ пек каланă. Тĕлĕнмелле те, хĕрарăма ирĕке кăларнă. Тен, ун хыççăн йĕрленĕ? Черетлĕ арест тĕлне, чăн та, унăн ĕçĕ хулăнлансах кайнă. Ольга тăна кĕме пуçланă çĕре следстви фантазийĕ унран совет влаçĕн чи хаяр тăшманне туса хунă. Ăна, черетлĕ ачине кĕтекенскерне, каллех арестленĕ: Ольга Ленинград Тĕп комитечĕн пĕрремĕш секретарьне Жданова вĕлерме хатĕрленнĕ-мĕн. Ку вара – пуç касмалли статья...

Ольга пирки пĕлĕшĕ – ăна вара питĕ вăйлă хĕненĕ – çапла каланă-мĕн. Ольга та йышăннă хăй пирки суяна. Протокола алă пуснă. Суд йышăнăвне кĕтме пуçланă. Тĕрĕссипе, мĕнпе вĕçленессипаллă пулнă ĕнтĕ, е вĕлереççĕ, е нумай çуллăха хупаççĕ. Берггольца та никам та шеллемен. Тĕрмере унăн ачи вилĕ çуралнă.

### Çăлăнăç

Çăлăнăç кĕтмен çĕртен çитнĕ. Александр Фадеев Писательсен союзне ертсе пынă. Ăна Сталин те хисепленĕ. Çавăнпах Фадеевăн çылăхĕсене каçарнă-тăр: арçын эрнипе эрнипе ĕçнĕ, хĕрарăм çыравçăсемпе явăçнă... Унран парти билетне тахçанах туртса илмелле пек. Унăн пултарулăхне Сталин хăй хаклани çăлса пынă. Ĕçет-и? Мĕнех вара? Мĕнле вырăс ĕçкĕпе аташмасть? Фадеев хăйĕншĕн тĕрлĕ инстанцие çитнине, НКВД сăмси умĕнче парти билечĕпе сулкалашнине, "хуçа" патне каяссипе хăратнине каярахпа пĕлнĕ Ольга. Нумай çул иртсен, Фадеев хăй çине алă хунине илтсен, хĕрарăм вокзала килти çи-пуçпах чупнă: ĕлкĕресчĕ кăна, çак çын çине юлашки хут пăхса юласчĕ...

Истори урапи каялла та куçать-мĕн. Берггольца алă хистесех пустарни усăмланать – ача вилĕ çурални те çакнах çирĕплетет... Следователь сасси йăваш янăрать. Ĕçе хупаççĕ. Ольга тĕрме хапхи леш енче. Кулма хăтланать вăл. Темшĕн пулсах пĕтмест. Умра – пĕтĕм пурнăç. Анчах та темшĕн тӳпе тĕксĕм...

Çавăнтанпах хĕрарăм сумкинче шăл щеткипе колготки яланлăхах вырăн тупаççĕ. Тата хăçан арестлессе кам калĕ? Камерăна вара вĕсене никам та пырса памасть. Акă 1938 çулта ăна кану çуртĕнченех пуçтарса кайнă. Тĕрме хапхинчен уйрăлма çапах та вăй тупать хĕрарăм. Вак укçине шутласа пăхса трамвай чарăнăвĕ еннелле утать. Тепĕр кун – "Электросила" енне.

Ирĕке тухсан Берггольца Писательсен союзĕн членĕн билетне, ВКП/б/ кандидачĕн карточкине таварса параççĕ. Ĕçе илеççĕ. Анчах та текех çуратаймасть вăл. Çие юлнисем, хĕрарăмран мăшкăлланă евĕр, яланах раштав уйăхĕнче ӳкеççĕ. Шăпах çак уйăхра ăна, çара уранскерне, юнланса пĕтнĕскерне, тĕрме больницине сĕтĕрнĕ. Шăпах унта таталнă кун çути курайман Степкăн пурнăçĕ...

Анчах та малалла та пурăнмалла-çке. Партпухусем, тĕрĕс сасăлавсем... Çаксене халĕ мĕнле ĕненĕн? Юрать-ха юратăвĕ çумрах пулнă. Шăпах вăл вăй парса тăнă хĕрарăма. Николай, ăна çапла тума темĕнле хистесен те, сутман арăмне. Ольга упăшкине арçын ача парнелес шанăçне çухатман. Анчах та тата икĕ çултан вăрçă пуçланнă.

Тахçан та çырнă-ха вăл. Ăна чап кĕтнине пурте каланă. Анчах та вĕсем калани ниепле те пурнăçланман. Йăлтах тĕрмере, ачине вилĕ çуратнă хыççăн, пуçланнă. Пысăк инкек Ольгăна пысăк поэта çаврăнă. Анчах та вăл сăввисене пытарнă. Ленинград блокади унăн çăлтăр сехетне çаврăннă. Шел, Николай чĕрĕ юлайман.

### Чĕрĕ виле

Хыçалалла çаврăна-çаврăна сăмах перекен шофера хуравланă май Ольга мăшăрне аса илнĕ. Подъездра ăнсăртран асăрханă ăна хĕрарăм. Арçыннăн утма та вăйĕ юлман. Хĕрарăм упăшкине хăй çине хурса сĕтĕрсе хăпартнă. Ир енне арçын кăшт çăмăлланнă пек пулнă. Анчах та выçлăх хăйĕн ĕçне тунă. Арçын ăсран тайăлма пуçланă. Юлашкинчен ăна больницăна хунă. Хула тепĕр кĕтесĕнче пурăнакан Ольга, выçса тата ывăннипе пула хăй те аран-аран çӳрекенскер, ун патне противогаз сумкине темиçе татăк çăкăр чиксе пынă.

Юратнă çын чунĕ тухичченех вилние курма питĕ йывăр. Николай ăсран тайăлсах пынă. Хĕрарăма вара лайăх арçын, Ленинград радиокомитетĕнче ĕçлекен Георгий Макогоненко, килĕштернĕ. Берггольц радиопа тӳрĕ эфирта сăвăсем вуланă. Сăвăç çĕнтерĕве ĕненнĕ. Çак ĕненӳ ыттисене те куçнă. Берггольц сăввисем блокадăна лекнисене çынлăха упраса хăварма пулăшнă, хăйсене чĕрĕ юлма хавхалантарнă.

### Телей хӳри кĕске

Николайпа пĕрле Ольга та вилме хатĕр пулнă. Вăй пĕтнĕ. Текех кĕрешеймен хĕрарăм. Георгий ăшăтнă унăн чунне. Ольгăшăн вăл няньăнах çаврăннă. Николай Молчанов сăнӳкерчĕкĕ Ольгăпа Георгий пĕрлешсен те хĕрарăмăн сĕтелĕ çинчех тăнă. Берггольц каллех телейлĕ. Телей хӳри кĕски пирки вара кам шухăшлатăр?

...Такси каялла çул тытнă. Счетчик самай пысăк цифра кăтартнă. Ольга Берггольц халĕ тӳлеме пултарнă вăл. Килте тирпейлӳçĕ Анна Николаевна кĕтнĕ. Тата... пичет машинки. Ун çумĕнче – коньяк пуçланă кĕленчи. Ольга нумай ĕçнĕ. Никамран вăтанмасăр. Çамрăк чухне эрех савăнăç кӳнĕ. Каярахпа хĕрарăм хуйхине унра путарнă.

Вăрçă хыççăн Берггольц каллех инкеке лекнĕ. Арестлессинчен хăраса вăл сăввисене пытарнă. Эрех хальхинче лăплантаракан эмеле çаврăннă. Ольгăна Ахматовăпа туслă пулнăшăн айăпланă. Пухусенче те, хаçат страницисенче те тустарнă ăна. Хăй патне килессе Ольга кĕтсех тăнă. Анчах та ун вырăнне... Сталин премине панă. Çапла хăрушлăх сирĕлнĕ, анчах лăпланмалли меслет чире çаврăнса ĕлкĕрнĕ...

"Волга" хĕрарăм пурăнакан çурт енне çаврăннă. Ольга чӳречесене сăнаса Николай сассине илтме тăрăшнă. Макогоненкăпа вĕсем е çапăçнă, е мирлешнĕ. Арçын хĕрарăма питĕ юратнине каланă. Пĕррехинче вара, Ольгăна халь-халь арестлеме килессе кĕтсех тăнă чух, Георгий чĕри тĕлне ярса илсе тĕшĕрĕлсе аннă: "...Сансăр пурăнаймастăп эпĕ..."

Анчах хальхинче юрату сĕвĕрĕлнĕ. "Пурăнайман" арçын урăххи патне тухса кайнă. Çапла кирлĕ те пулĕ – Ольга пурнăçĕнче çапах та пĕртенпĕр Николай Молчанов кăна пулнă. Акă ăна вăл пусма картлашкисемпе йăтса хăпарать, чуптăвать... Ольга кăсса кайса кулать. Йăлтах – юмахри пек. Арăмĕпе упăшки вăрăм ĕмĕрлĕ те телейлĕ пулнă юмахри пек...



– Чунăм, эсĕ мана кавир илсе парăн-и?
– Тата мĕн? Шăпăрпа та лайăх вĕçĕн-ха...

* * *

Упăшка лавккаран таврăнчĕ. Хăй ман çине чеен пăхнă май сумкинчен черетпе кăлара-кăлара хурать: хырăнас умĕн тата хыраннă хыççăн сĕрĕнмелли крем, гель, шампунь, сухал илмелли станок, одеколон, нуски, футболка, труççи... Унтан ман енне çаврăнать те йăл кулса ыйтать:
– Ну, февралĕн 23-мĕшĕнче мĕн парнелĕн-ха эсĕ мана?

* * *

Дача. Хĕрарăм йăран чавать. Арçын диван çинче телевизорпа футбол пăхса выртать. Тăхтав вăхăтĕнче хайхи пахчана тухса арăмĕ мĕн ĕçленине пăхать. Хăй çав вăхăтра сăра сăрăхтарать. Ĕçсе тăраннă хыççăн курка тĕпĕнче юлнине арăмĕ енне тăсать:
– Ĕçетĕн-и? Ăшу хыпрĕ пуль...
– Ай, тавах! – савăнсах каять хĕрарăм.
– Мĕн тав тумалли? Пĕр ĕçех тăватпăр вĕт, – тет арçын.

* * *

– Ĕнер ман арăм вăтаннипе чутах çунса кайман.
– Мĕнле майпа?
– Ара, килте пушар тухнă. Пушарнăйсем килнĕ те алăкран шаккама пуçланă. Арăм вара вĕсене кĕртмен – сăрланса ĕлкĕреймен иккен вăл...

* * *

– Маша, эсĕ каллех ача кĕтетĕн-им?
– Çапла.
– Камран?
– Экс-упăшка килсе кайрĕ – икĕ ачапа пăрахса хăварнăшăн каçару ыйтма...

* * *

– Ку апата йăлт çисе ярсан самăрăлса каймастăн-и эсĕ?
– Çисе пăхар-ха малтан.

* * *

Юлташăм манăн – ылтăн шайĕнче! ...Ларатăп çапла – чипсы çиетĕп, кока-кола ĕçетĕп. Вăл мана сăнаса ларчĕ-ларчĕ те:
– Эсĕ çапла апатланнине пула вилсе кайсан санăн мультиваркуна илсе кайма юрать-и? – терĕ.

* * *

– Эрех ĕçнине пула манăн арăм усаллансах пырать.
– Мĕн, арăму тăтăшах ĕçет-им?
– Çук-ха, вăл ĕçмест, сăра-эрехпе тусли – эпĕ. Анчах та эпĕ мĕн чухлĕ ытларах ĕçетĕп, вăл çавăн чухлĕ ытларах усалланса пырать.

### ☺И-ХИ-ХИК☺

* * *

Енчен те сирĕн арçын:
1. Ĕçмест.
2. Туртмасть.
3. Сирĕнпе вăрçăнмасть.
4. Тарăхтармасть.
5. Компьютер умĕнче лармасть.
6. Юлташĕсемпе мунчана çӳремест пулсан – патак илĕр те тĕксе пăхăр: чĕрех-и вăл, вилсе кайман-и?

* * *

Пĕри ĕçе мухмăрла пынă. Пуçĕ ыратать – чăтма çук. Ку çитмен – пуçлăх хăй патне чĕнтерет.
– Вăт мĕн тумалла манăн санпа – икĕ кун ĕçе тухман вĕт!!! – пуçлăх пӳлĕмĕ кĕрлесе кăна тăрать.
– Ярса памалла, каçармалла та кайма ирĕк памалла... – мăкăртатать лешĕ сăмса айĕн.

* * *

Юратакансен кунĕ, çăварни тата каçармалли вырсарникун пĕр вăхăта лексен мĕн тумалла? Çакăнпа усă курмалла! Каçар, мăшăрăм, сана урăххипе улталанăшăн, эпĕ санах юрататăп. Акă икерчĕ çи, тен, хăвна çăмăлрах туйăн...


## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

АУ "Издательский дом "Хыпар"
**СДАЕТ ПОМЕЩЕНИЯ ПОД ОФИС**
на 7 этаже Дома печати.
Справки по телефонам: 28-83-70, 56-04-17.

### ПУЛĂШУ УСЛУГИ

**25.Чăнкă тамада.** Т. 8-937-393-57-79.
**38.Чистка колодцев.** Т. 89613429059.
**51.Бурение колодцев,** скважин, кольца колодезные высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.
**152.Бурение скважин** на воду. Т. 8-960-302-12-93.

### ТУЯНАТĂП КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Т. 8-962-599-47-06.
**65.КРС** – коров, бычков, **тёлок; лошадей.** Т. 8-903-389-85-72.
**66. КРС – коров, бычков, тёлок;** лошадей. Т. 8-961-345-05-28.
**141.Коров, бычков и лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.
**333.Бычков, тёлок, коров, свиноматок.** Т. 8-937-014-49-97.

### ĔÇ РАБОТА

**110.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 8-925-002-22-38.

### СУТАТĂП ПРОДАЮ

**2.Акция! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 8-967-470-46-77.
**3.Акция! Кольца колодезные** диам. – 0,7 м., 1 м., 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 8-967-470-46-77.
**4.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер. Доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-987-576-65-62.**
**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидровибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.
**7.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.
**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.
**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.
**15.Кирпич, кольца.** Т. 89613393363.
**17.Песок, гравмассу, керамзит,** чернозём, навоз. Доставка. Т. 8-905-197-40-19.
**20.Кирпич, к/блок.** Т. 89276678378.
**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 89033456307, 89176757528.
**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.
**24.ГРАБЛИ,** косилки, **сажалки,** копалки, **окучники, опрыскиватели.** Доставка. Т. 89278533596.
**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **к/кольца.** Доставка. Т. 8-903-346-85-56.
**30.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.
**31.Песок, гравмассу,** бой кирпича, **щебень. Д-ка.** Т. 89033225766.
**48.Керамблоки, бой** кирпича, бетона; сваи, **ОПГС,** песок, **ФБС.** Т. 8-906-381-44-20.
**53.ОТРУБИ, зерно, к/корм,** сахар, **муку.** Доставка. Т. 89373916016.
**58.Гравмассу, щебень, песок, керамзит,** бетон, чернозем. Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.
**59.ТЕПЛИЦЫ от производителя.** Доставка. Тел. 48-16-54.
**74.Керамблоки вибропрессованные, пропаренные.** Все размеры. Доставка. Т. 8-917-677-68-46.
**89. БЛОКИ керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. Т. 89373866629.




# Сăмах каçмăш

**Владислав ПЛАТОНОВ /Шупашкар районĕ/ хатĕрленĕ**

**СЫЛТĂМАЛЛА:** 7. Тупăсем вĕçĕмсĕр пени. 8. Крахмалтан тунă çилĕм. 10. ...ăн сар чăххи сар çăмарта тунă тет. 13. Шульăк, ултавçă. 16. Будапешт çынни. 17. Туркменири пушхир. 18. Çывăрас умĕн çăвар карăлни. 19. Атăл тăрăхĕнчи кайăк. 23. Кăткăс гимнастика вăййисене ăста тăвакан. 24. Ӳт çинчи пӳрлешке. 25. Пӳлĕмри сĕтел-пукан. 29. Кăнтăр Азири Республика. 31. Завод ертӳçи. 32. Бишкек çыннисем калаçакан чĕлхе.

**АЯЛАЛЛА:** 1. Япала тăрăхла вырнаçнине пĕлмелли хатĕр. 3. Тинĕсри пысăк кимĕ. 4. Пасар пĕрле, ... расна. 6. АПШăн çар ведомстви. 9. Сарлака çан-çурăмлă çын. 11. Ĕлĕкхи Раççейри çамрăк çуран салтак. 12. Тĕрлĕ тĕслĕ ансăр вăрăм лента. 14. Ансăр мар. 15. Лутака çын. 20. Андрей Сахаров – физик теоретик, СССР АН ...ĕ. 21. Африкăри хутла чи сахал пĕлекен çĕршыв. 22. Тăвалла мар. 26. Качча каяс хĕре ... тытса чарайман. 27. Чăвашсен – Петĕр, вырăссен – Петр, украинсен ... .

**ПĔКĔСЕМ МАЙЛĂ:** 2. Вĕрсе каламалли музыка инструменчĕ. 5. Аттен ашшĕ. 28. Мăшăрлану ...ĕ. 30. Ямшăк выраăнĕ.

### Иртнĕ номерте пичетленнĕ сăмах каçмăш хуравĕсем:

**Сылтăмалла:** 5. Калта. 7. Раман. 8. Варвари. 9. Анис. 13. Канн. 15. Çавракa. 16. Анаслу. 17. Киргиз. 19. Сосиска. 20. Çăка. 22. Парк. 26. Манекен. 27. Шатра. 28. Радий.
**Аялалла:** 1. Капан. 2. Сава. 3. Приз. 4. Саман. 6. Австри. 10. Именчĕк. 11. Карлсон. 12. Скрипка. 14. Аксиома. 18. Пионер. 21. Ăсчах. 23. Радио. 24. Ямал. 25. Анра.


« ХЫПАР »
Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор – тĕп редактор В.В.ТУРКАЙ

Чăваш хĕрарăмĕ

Çырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – Е.М.АТАМАНОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службиi 2013 çулхи апрель уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.

РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ
ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.
Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07
Электрон почти: hypar@mail.ru

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи"** рубрикăсенче пичетленеççĕ.
Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
56-00-23 – издательство директорĕ.
Тираж 8101. Заказ 611.